ХЫПАР

САМАНТ

ÇУ
5 № 2014

12+

Çырăнтару – 2014. 2-мĕш çур çуллăх.
«Саманта» çырăнсан эпир – хĕрӳ чĕресем.
Чуна хĕм тивертет «Саманта»!!!

Шăпа карчĕсем

Çу уйăхĕн 9-мĕшĕ – Аслă Çĕнтерӳ кунĕ. 2-мĕш тĕнче вăрçи вĕçленнине Анăç Европăра, Америкăра вара çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче паллă тăваççĕ. Çĕнтерӳ кунĕсем мĕншĕн тĕрлĕрен килнин историйĕ çакнашкал.

Çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче Францири Реймс хулинче Европăн вăтам вăхăчĕпе çур çĕр иртсе 2 сехет те 40 минутра Альфред Йодль немĕç генералĕ Германи капитуляцилеммин – парăннин – Актне ал пуснă. Капитуляци актне СССР енчен союзниксен командованийĕ çумне çирĕплетнĕ Иван Суслопаров генерал-майор йышăннă. Çак Акт тăрăх – Германи çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче, Европăн вăтам вăхăчĕпе 23 сехет те 1 минутра капитуляцилеммĕ.

Иван Суслопаров капитуляци Акчĕн текстне Мускава ярса парсан Иосиф Сталин мĕн хуравласса, Акта алă пусма ирĕк парасса кĕтнĕ. Анчах Мускав хуравĕ Европăн вăтам вăхăчĕпе çур çĕр иртсе 2 сехет те 40 минут тĕлне çитеймен. Суслопаров генерал-майор Акта Мускав ирĕк памасăрах алă пуснă. Капитуляцие алă пуснă хыççăн тин Сталинран хурав килнĕ: Аслă командующи Акта ал пусма чарнă. СССР ертӳçи капитуляцие йышăнма Георгий Жуков маршала хушнă.

Виççĕмĕш рейх капитуляцине Георгий Константинович Берлин патĕнчи Карлсхорст хулинче Мускав вăхăчĕпе çур çĕр иртсе 43 минутра йышăннă. Çакна пула ĕнтĕ Совет Союзĕнче Çĕнтерӳ кунне Германие хирĕç çапăçнă çĕр-шывсенчен пĕр кун каярах паллă тăваççĕ.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи хыççăнах çу уйăхĕн 9-мĕшне СССРта анлăн паллă туман. Халĕ Çĕнтерӳ кунĕ – Раççейĕн чи сăваплă уявĕ. Малашне вара çак кун – çу уйăхĕн 9-мĕшĕ – çĕр-шывăн чи пĕлтерĕшлĕ уяв пулса тăрĕ.

«Самант» тусĕсене вăрçă ветеранĕсен аса илĕвĕсемпе паллаштарать.

ВАСИЛИЙ АЛЕКСЕЕВИЧ НИДАЕВ

Куславкка районĕнчи Эйпеçре çуралнă. Улатăрта учительсем хатĕрлекен училище хыççăн Шупашкарта учительсен курсне пĕтерсен икĕ уйăха яхăн вĕрентекенре ĕçленĕ. 1940 çулта ăна Хĕрлĕ Çара илнĕ. Çар тата политика хатĕрленĕвĕн отличникĕ. Аслă вăрçа Баку çывăхĕнчи Сумгаит станцийĕнче кĕтсе илнĕ – вĕсен батальонĕ складсем сыхланă.

Вăрçă тухсан Василий Алексеевича Тбилисие, полк шкулне вĕренме янă, унта вăл аслă сержант званине илнĕ. Вĕсем маршрота хатĕрлекенсем пулнă. Салтаксене 2-3 уйăх вĕрентсен ротăсене фронта ăсатнă.

Çĕрай карман Аджимушкай

– Пĕрре çĕрле вăратрĕç, строя тăтăмăр, – каласа парать Василий Алексеевич. – «Камăн вăтам пĕлӳ – 3 утăм малалла!» – теççĕ пире. Эпир темиçе çын строй умне тухрăмăр. «Кам 8 класс пĕтернĕ – 3 утăм малалла!» – терĕç унтан. Унашкаллисем тухрĕç. «Кам 7 класс вĕреннĕ – 3 утăм малалла!» – хушрĕç юлашкинчен. Строй умне тухнисене Кутаисие – кĕçĕн лейтенантсен шкулне ăсатрĕç. 3 уйăхлă курс пĕтертĕмĕр унта. Ун хыççăн вара Керчь хулине лекрĕм. Тинĕс хĕрринчех вырнаçнă училищере темиçе кун вĕрентĕмĕр. Эпĕ минометчик пулса тăтăм – 1-мĕш номер. 2-мĕш номер – Хартанович, белорус каччи. Пирĕн миномет 50 миллиметрлă, лутукра 7 мина.

1942 çулхи çу уйăхĕнче тревогăпа çĕклерĕç те грузовиксем çине лартрĕç. Керчьран 20-30 çухрăм тухрăмăр та фронта çитрĕмĕр. Хӳтĕленме тытăнтăмăр. Сывлăшра нимĕç самолечĕсем иртĕхеççĕ. Совет самолечĕсене курмарăм. Нимĕç танкĕсем курăнса кайрĕç. Вĕсем хыçĕнче пехота. Çуй-комплектри 7 минăран 4-шне нимĕç пехоти енне кăларса ятăмăр. Танксене хирĕç тăма пирĕн хĕç-пăшал çук. Чакма тытăнтăмăр. Çавăн чухне пирĕн пата пĕр аслă лейтенант пычĕ те: «Минăсем пур-и?» – тесе ыйтрĕ. «Виçĕ мина пур!» – тетпĕр ăна. «Нимĕçсене перĕр!» – хушрĕ вăл. Эпир миномета тăратрăмăр та юлашки 3 минăна кăларса ятăмăр. Тĕллемесĕрех ĕнтĕ. Минăсем юлмарĕç. Складра та çуккине малтанах пĕлтернĕччĕ.

Чакатпăр мар, нимĕç танкĕсенчен Керчь еннелле тараттăр эпир. Манăн 2-мĕш номер: «Пур пĕр мина çук, лутука пăрахас пуль?» – тет. «Пăрах!» – тетĕп. «Минометран мĕн усси?» – ыйтатăп эпĕ Хартановичран. «Ăна та пăрах!» – тет вăл.

Нимĕç танкĕсем Керче кĕмерĕç, пеме меллĕ вырăн йышăнса чарăнчĕç. Эпĕ вара училищене каялла çитрĕм, паллакансем унта никам та çук. Темле капитан пире: «Ниçта та ан кайăр, çĕрле куртан çĕмĕрсе тухатпăр! Унччен çынсене тата пуçтарăр», – терĕ. Çур çĕр тĕлнелле 300 яхăн çын пуçтарăнтăмăр. Çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче 3 пая уйăрăлса çĕрлехи урамсемпе атакăна кайрăмăр. Нимĕçсем пулеметсенчен переççĕ, эпир, çĕрле пулсан та, ура! кăшкăратпăр. Тухрăмăр хуларан. Нимĕçсем шрапнельпе пеме тытăнчĕç. Капитан пире ăçта илсе каять – пĕлместпĕр. Темиçе çухрăм утрăмăр. «Тăрăр! Кам килет?» – чарчĕç пире. «Хамăрăннисем!» – тетпĕр эпир. Эпир иккен Аджимушкай поселокĕ çумĕнчи чул хăвăлĕсем патне çитнĕ.

Керчь хулине Аджимушкай патĕнче кăларнă чулсенчен хăпартнă. Чул хăвăлсем 20 çухрăм ытларах та тăсăлаççĕ. Аджимушкай гарнизонĕ 3 пине яхăн салтакран тăнă. Эпĕ списокра 2336-мĕш çыннăччĕ. Çар çыннисемсĕр пуçне çĕр айĕнчи крепоçра хĕрарăмсемпе ачасем те пулнă, – аса илет Василий Алексеевич.

Нимĕçсен «Хир кăрккисене тытма тухни» операцийĕ (Хĕрлĕ Çаршăн – «Керча хӳтĕленĕ операци») 1942 çулхи çу уйăхĕн 7-15-мĕшĕсенче иртнĕ. Вермахтăн 11-мĕш çарĕ Крым фронтне аркатса тăкнă. Тамань (Чемен) çур утравĕ çине ыттисемпе эвакуациленме пултарайман, Керчьра тăрса юлнă салтаксемпе офицерсем Аджимушкай чул хăвăлĕсене кайнă. Аджимушкай поселокĕ Керчь хулинчен 5 çухрăмра вырнаçнă. Чул хăвăлĕсем унта иккĕ: пысăкки (асли) тата пĕчĕкки. Аслă чул хăвăлти çĕрай крепоç гарнизонĕнче 10 пин çынна яхăн пулнă (чăннипе цифрăсем халĕ те тĕрлĕрен: 5 пинрен тытăнса 15 пин таранах асăнаççĕ). Пĕчĕк чул хăвăлĕнчи гарнизон 3 пине яхăн çынран тăнă. Кунта та хĕрарăмсемпе ачасем пулнă. Василий Алексеевич Пĕчĕк чул хăвăлĕнчи чаçе лекнĕ те ĕнтĕ. Çар литературинче Аслă чул хăвăлĕнчи гарнизон çуй-хĕлне ытларах çутатаççĕ, Пĕчĕкки унăн çулташĕ пек кăна курăнать. Кĕçĕн Аджимушкай гарнизонĕ 4 батальонран тăнă. Хисеплĕ ветерана малалла калаçтарар:

– Апат-çимĕç склачĕ пуян марччĕ. Селедкă, сахăр тата табак çеç пурччĕ. Эпĕ нихăçан та туртман. Тăварланă

пулă е сахăр çисен – шыв ĕçтерет. Шывĕ вара пирĕн пачах çукчĕ. Чул хăвăлĕ умĕнче пусă пурччĕ. Анчах ун патне пыраймастăн: çӳлтен нимĕçсем пулеметсенчен персе тăратчĕç. Чул хăвăлĕнче шыв тумлакан вырăнсем пурччĕ. Тумлам-тумлам пуçтарнă шыва ачасене тата аманнисене паратчĕç.

Нимĕçсем газ атакине çу уйăхĕн 25-мĕшĕнче пуçланă тенине эпĕ темиçе çĕрте те вуланă. Вăл кун газпа мар, тĕтĕм шашкисемпе усă курчĕç. Çăра тĕтĕме чăтма йывăрччĕ. Тепĕр кунне вара нимĕçсем çĕр айне кăрал газ ячĕç. Çĕр урай çийĕн пирĕн еннелле тĕтре шунине асăрхарăмăр эпир. Пирĕн вара противогазсем çук. Нимĕн те тăваймастăн: е шăши пек вилсе выртмалле, е ... Ирĕксĕрех чул хăвăлĕнчен тулалла тухма тытăнтăмăр. Çав кун çĕр айĕнчен 150-200 яхăн çын тухрĕ. Чул хăвăлĕнчен хамăрăннисемех пире пеме пуçларĕç. Тĕллесе пемерĕç пулмалла, хăратса кăна. Кама та пулин пуля лекнине асăрхаман.

Çакна та пĕлтерер. Василий Алексеевич вăрçăра, тытăнра тата мирлĕ пурнăçра мĕн курнă-тӳснине унăн мăшăрĕ Зоя Нестерова «Арçынсем те йĕреççĕ» романра çырса кăтартнă (кĕнекене вырăсла куçарса та пичетленĕ).

ФЕДОР АРСЕНТЬЕВИЧ КОШЕЛЕВ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Утаркассинче 1916 çулта çуралнă. 1939-1940 çулсенчи финн-совет вăрçине хутшăннă, Аттелĕх Аслă вăрçинче аслă сержант Кошелев разведчиксен отделенийĕн командирĕ пулса çапăçнă. Паттăр разведчик 1996 çулта ĕмĕрлĕхех куçне хупнă. Федор Арсентьевичăн аса илĕвĕсемпе паллаштарар туссене.

Çĕнтерӳ умĕн

1945 çулхи ака уйăхĕнче Хĕрлĕ Çар Австрие ирĕке кăларма тытăнчĕ. Пирĕн пĕр яла тытса илмеллеччĕ. Сăрт çинче чиркӳ ларатчĕ, ун тăрринче вара нимĕç пулеметчикĕсем вырнаçнăччĕ. Пехотăна пуç çĕклеме памастчĕ пулемет вучĕ. Пирĕн пĕрле тупă тавраш çукчĕ, стрелок хĕç-пăшалĕ çеç. Нимĕн те тăваймастăн: приказа пурнăçламалла – яла илмелле. Пулемет точкине апла ал вĕççĕнех пĕтермелле. Тăшмана тĕп тума пĕр юлташпа – опытлă разведчикпа кайрăмăр. Пытана-пытана шуса чиркӳ патне çитрĕмĕр, пулеметчиксем пире асăрхаймарĕç. Йăпшăнса чиркӳ тăррине хăпарма тытăнтăмăр. Нимĕçсем сисрĕç те пире пеме тытăнчĕç. Эпир хирĕç гранатăсем вăркăнтартăмăр. Тăшман пульли çак тытăçура манăн юлташăн пурнăçне татрĕ.

Пулемет расчетне тĕп тунăшăн, пехотăна çул уçса панăшăн иксĕмĕре те (юлташа вилнĕ хыççăн) Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсемпе наградăларĕç.

Аслă çĕнтерӳччен уйăх та юлманччĕ ун чух. Германи шăпи паллăччĕ. Çавăнпа тăшман пире хирĕç çине тăрса çапăçнине хăш чух ăнланма та йывăрччĕ. Пуля-снарядшăн вара çут тĕнче пур-и е çук-и – пур пĕрех. Телей тени манăн ытларах пулнă иккен: юлташ пуçне хучĕ, эпĕ чĕрĕ юлтăм. Çĕнтерĕве кĕтсе илтĕм!

Красноармейскую книжку не всегда при себе. Не имеющие книжек — задержать

1. Фамилия Кошелев
2. Имя и отчество
3. Звание и должность
4. Наименование части (учреждения)
5. Наименование подразделения (батальон, рота)
6. № личного знака

Личная подпись владельца книжки

Командир роты

Капăртма

1944 çул. Хĕрлĕ Çар наступленире. Манпа пĕрлех хамăр ял çынни – Петр Григорьевич Порфирьев çапăçать. Пирĕн чаç пĕр яла тытса илчĕ (тĕрĕсрех каласан – пĕр яла шуса кĕчĕ). Унта никам та çук. Çыннисем тарса пытаннă. Нимĕçсем пирĕн енне пĕр чарăнми переççĕ. Петьăпа иксĕмĕр пĕр хаттăна асăрханса кĕтĕмĕр. Кунта та никам та çук. Тĕлĕнмелли вара – хуçисем кăмака хутса хăварни. Пирĕн наступленине кĕтмен те – хаттăрисем çăкăр пĕçерме хатĕрленнĕ иккен. Чуста хунă савăчĕ те кăмака умĕнчех ларать.

Тыл тăрса юлнăран, кухня ĕлкĕрсе пырайманран хамăр ĕнтĕ икĕ кун ăша чĕптĕм хĕлхем яман. Çиес килет, кунта вара – хăпарнă, хатĕр чуста, кăварланнă кăмака. Нимĕç пульлисем чӳречерен шăхăрса вĕçсе кĕнĕрен хаттăра пуç çĕклеме те май çук. Петя кĕтесри сĕтел айне шуса кĕчĕ, эпĕ майпен кăмака умнелле талпăнатăп. Шухăш кĕрсе кайрĕ: май пур чухне капăртма пĕçерсе илес-ха.

Юлнă вут пуленкисене кăмакана ывăтрăм. Çатма тупса хĕртме лартрăм. Пур ĕçе те ура çине тăмасăр тăватăп, урай тăрăх шуса çеç çӳретĕп. Капăртма пĕçеретĕп тесе вилсе выртас килмест. Кирлĕ чух çеç кăштах çĕклесе илетĕп. Çатма хĕрсен чуста хутăм та каллех кăмакана лартрăм. Кăшт тăрсан çатмана туртса кăларса капăртмана çавăрса хутăм. Пĕрремĕш çимĕç пит типтерлех пиçеймерĕ, кăмрăк çине ӳксе вараланчĕ. Çапах аптрамасть. Пашалăва çурмалла хуçрăм та çуррине Петьăна патăм. Питĕ тутлă. Тепĕр капăртма лартса ятăм. Пиçсе çитсен çурмалла пайланăччĕ кăна ăна – эпир йышăннă яла тытса илме нимĕç танкĕсем атакăна тухрĕç. Пирĕн отрядăн чакма тиврĕ, çапах ялтан тухса кайиччен халь çеç кăмакаран кăларнă капăртма тутанса чĕре сурри турăмăр Петьăпа.

Вулакансене сĕннĕ аса илӳсем совет командованийĕн стратегиллĕ планĕсене уçса кăтартакан йышшисем мар. Ахаль салтак нуши унта. Чараксăр вилĕм арманĕн ахăр самани çĕнтерӳ хыççăн тек нихăçан та каялла тавранмасса ĕненнĕ Аттелĕх Аслă вăрçи çулăмĕ ялкăшнă вăхăтра. 2-мĕш тĕнче вăрçи этемлĕх историйĕнчи юлашки вăрçă тесе шухăшлакансем те пулнă. Малашлăхра вара фашизм идеологине Раççейре те килĕштерекенсем тупăнаççĕ текен шухăш никам пуçне те вырнаçман ун чух.

Сăн ӳкерчĕкре: сулахайри – Федор Кошелев.

Владимир СТЕПАНОВ

"Пичетленнĕ кашни сăвă-калавшăн савăнатăп!.."

Малта пыракана ăмсанакансене çапла калас килет: тăрăшусăр çитĕнӳ килес çук, ан манăр çакна. Кахалланмасăрах çанă тавăрса ĕçе пуçăнсан ăнăçу хăвăра та нумай кĕттермĕ.

Пирĕн хастар авторсенчен пĕри, сăвă хыççăн сăвă шăрçалакан Элина Иванова – ЧР Пуçлăхĕн стипендиачĕ, Елчĕк районĕнчи Кĕçĕн Таяпа шкулĕнче тăхăрмĕш класра вĕренет. Шкулти пĕр мероприяти те унсăр иртмест. Çак хĕр ача вĕрентекенсемшĕн те, ашшĕ-амăшĕшĕн те сылтăм алă пекех.

Ултă çулта чухне вăл сцена çине пĕрремĕш хут тухнă. Çав куна паянхи пек ас тăвать. Анатолий Никитин композитор кĕвĕленĕ «Анне» юрра хĕр ача чун-чĕререн шăрантарнă та тӳрех куракансен кăмăлне кайнă. Пултарулăхне пытарса пурăнас мар тесе вăл часах «Çăлтăрсен фиести» конкурса та хутшăннă, хăйĕн ӳсĕмĕнчи ачасем хушшинче çĕнтернĕ. Çавăнтанпа пĕр конкурс-олимпиадăран та пăрăнса юлмасть.

Шкулти ташă ушкăнне çӳрекенскер кунта та пысăк ăсталăх кăтартать, хусканăвĕсем илемлĕ те çаврăнăçуллă пулса тухаççĕ. Пур мероприятире те хастарлăхпа палăраканскерĕн яваплăх туйăмĕ яланах пысăк. Мĕн пĕчĕкрен спектакль-юмахра тĕрлĕрен роль калăплать. Унра артист туйăмĕ пурах çав (çакна ят пĕлтерĕшĕпе кăсăкланнă май тупса палăртрăм).

Элина спортпа туслă. Кире пуканĕ йăтма, теннисла тата шашка-шахматла выляма ăста. Район шайĕнчи ăмăртусенче çулсеренех малти вырăнсене тухать.

Пушă вăхăт тупăнсанах пултаруллă хĕр ача сăвă çырать. Хайлавĕсемпе республика конкурсĕсенче сахал мар çĕнтернĕ. «Букварьтен – илемлĕ литературăна çити» ăмăртăва халĕ те çĕкленӳллĕ кăмăлпа аса илет. Унăн 15-мĕш конкурсĕнчи «Поэзи» номинацире виççĕмĕш вырăна тухнă-çке вăл. Çавăн хыççăн малашне те ăсталăхне туптама тĕллев лартнă. «Паха тĕрĕ» ирттерекен конкурсра икĕ çул хушши çĕнтернĕ. Тата Элинăна çак фабрика 90 çул тултарнă ятпа хатĕрленĕ курава «Тĕрлет пике илемлĕ тĕрĕ» ятлă сăвă вулама чĕннĕ. Шыв юххи пек шăнкăршăнкăр сасăллă хĕр ача кашни йĕркене чун витĕр кăларать, итлекене самантрах тыткăнлать. Сăвă çырас ĕçре ăна тăван чĕлхепе литературăна вĕрентекен С.И. Маркова тата амăшĕ А.А. Иванова хавхалантараççĕ. Вĕсен ăшă та ырă сăмахĕсене илтсенех хĕр ачан кăмăлĕ çĕкленет, пурнăçа тата ытларах юратма тытăнать, çывăх çынсене савăнтарас килет.

«Эпĕ тарăн пĕлӳ илме ăнтăлатăп, шкулти тата киле панă ĕçсене яланах пурнăçлатăп, мĕншĕн тесен пирĕн класри ачасем пĕр-пĕринпе ăмăртса вĕренеççĕ, район шайĕнчи тĕрлĕ олимпиадăра çĕнтереççĕ», – тет Элина.

Вĕренӳре кăна мар, обществăлла ĕçсенче те хастарлăх кăтартнăшăн Элина Иванова кăçал ЧР Пуçлăхĕн стипендине тивĕçнĕ. «Çак сумлă хавхалантару мана тата тăрăшуллăрах пулма хистет», – тет маттур хĕр ача. Пур предметпа та çитĕнӳ тăваканскер ытларах хими, чăваш чĕлхипе литератури, технологи тата вырăс литератури предмечĕсене кăмăллать. Çак кунсенче вара тăрăшсах экзамена хатĕрленет. Химипе биологие тарăннăн вĕрентекен А.Н. Маркова, вăлах Элинăн класс ертӳçи те, ачасене тĕрлĕрен тĕпчев ĕçне явăçтарать, кайран наукăпа практика конференцийĕсене хутшăнтарать. Кăçал акă маттурсем «Эткер» центр ирттерекен конференцире те палăрнă.

«Хамăн сăвăсемпе калавсем хаçатра пичетленсен эпĕ калас тени вулакан патне çитнишĕн çав тери савăнатăп. Тĕрлĕрен конкурса хутшăнма мана аттепе анне, пиччепе аппа хавхалантарса пыраççĕ. Тавах вĕсене!» – хĕпĕртет Элина.

Аппăшĕ тĕрлеме вĕрентнĕрен вăл халĕ çакă чун киленĕçне те алăран ямасть, пушă вăхăта пĕрре те ахаль ирттермест. Хăйĕн ĕçĕсемпе таврари мĕн пур çынна илеме курма, туйма тата хаклама хăнăхтарасшăн. Халĕ вара вăл вĕтĕ шăрçапа тĕрлет, çак паха та чуна илĕртекен парнепе тăванĕсене савăнтарасшăн.

Элинăн пысăк ĕмĕт пур – шкул хыççăн медицина енĕпе аслă пĕлӳ илсе фармацевт ĕçне пуçăнасси. Этем сывлăхĕшĕн тăрăшакан хăй те пархатарлăх куракан. Çакна ăнланакан ырă чунлă хĕр ача йывăрлăха парăнмĕ, нихăçан та нимĕнле пăтăрмах умĕнче те хăраса тăмĕ.

Çĕр çинче мĕн тĕрлĕ ят кăна çук пулĕ! Кашниех хăйне май илемлĕ тата унăн историйĕ те пурах. Çак маттур хĕр ачана та мĕншĕн шăпах Элина ят панă-ши? Унăн кукамăшĕ Еля ятлă пулнă иккен. Ăна хисеплесе ашшĕпе амăшĕ пепкине çапла чĕнме пуçланă та. «Кукамай пур енчен те пултаруллăччĕ, эпĕ те ăнах пăхнă пулĕ, çакна шанатăп», – тет Элина Иванова.

«Талантлисене пулăшмалла, талантсăррисем хăйсемех хирĕнсе тухĕç», – теççĕ халăхра. Элинăна та яланах ăнăçса пытăрччĕ, унăн çулĕнче пулăшса хавхалантаракансем ытларах тĕл пулччăр!

Лариса ПЕТРОВА

Иртни - йăлтах асра

Канаш районĕнчи Карăклă шкулĕн 11-мĕш класĕнче вĕренекен Женя Орловшăн хĕрӳ тапхăр тахçанах пуçланнă. Патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕсене паян вара пушшех вăйлă хатĕрленет вăл. Уроксем хыççăн консультацие юлать, библиотекăна кайса кĕнекесем илет. Килте те пĕр канăçлăх çук, тĕрлĕ литература вуласа конспект хатĕрлет. Ах, вăхăчĕ те хăвăрт шăвать-çке, çапла хăш чухне çур çĕр иртичченех ларать сĕтел хушшинче. Апла пулин те палăртнă тĕллеве йăлтах пурнăçласа пĕтереймест. «Паянхи ĕçе ырана хăвармалла мар-ха та. Анчах ытла нумай ĕç. Вĕçĕмсĕр вуламалла, çырмалла. Кăшт пуçа та кантарас килет, – тет кĕнекисемпе тетрачĕсене хупнă май. – Ачалăх çулĕсенех юрататтăм. Ун чухне шухăшсăр çӳренĕ. Паянхи пек умра йывăрлăхсем пулман. Малашне атте-анне çунатти айĕнче киленсе лараймăп. Ăс пухма Шупашкара çул тытасшăн. Алла юратнă професси илсе пурнăç çулĕпе пĕр тумхахсăр утасчĕ».



Икĕ аслă пиччĕшĕ пекех мĕн пĕчĕкрен ĕç çумне çыпçăннă Женя. Çулласерен аслисемпе пахча-çимĕçе çум курăкран тасатнă, шăварнă, йăрансене кăпкалатнă. Утă вăхăчĕ çитсен алла çава, сенĕк, кĕрепле тытнă. Пӳртре тирпей илем кĕртесси те арçын ачасем çинчех пулнă. Пĕри савăт-сапа, урай çунă вăхăтра иккĕмĕшĕ тусан шăлнă, виççĕмĕшĕ пӳлĕмре ешерекен чечексене шăварнă.

– Атте-аннене савăнтарнине нимĕн те çитмест. Çавăнпа малашне те кулленхи ĕçе тĕплĕн пурнăçласа пырар, – тенĕ пĕр тăвансем пĕр канашлă пулнă май.

Пиччĕшĕсем спорта чунтан парăннине кура Женя та çав çулах суйлама тĕв тытнă. Çитменнине тата шкулта иртекен линейкăсенче хастар спортсменсене дипломсем, кубоксем парса хавхалантарнине курсан çав тери çунатланнă пĕчĕкскер.

– Манăн та аслисем пек пултаруллă пулас килет. Аттепе аннене те çакăн йышши парнесемпе хавхалантарас килет, – тенĕ хайхискер ниçта кайса кĕреймен енне.

Физкультура урокĕсене чăтăмсăрăн кĕтекен арçын ача кĕçех ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен секцине çыпăннă. Тренировкăсене кăмăлпа çӳренĕ, арçын ачасемпе хĕр ачасен çитĕнĕвĕсене кура вăл та хавхаланнă.

– Карăклă шкулĕн ятне малашне те çӳллĕ шайра тытас тесен халех çитĕнӳ еннелле ăнтăлмалла. Кĕçех аслисем пĕлӳ çуртĕнчен вĕренсе тухса каяççĕ. Çавăнпа та малашнехи шанчăк – сирĕнте, – тенĕ тренер кашнинчех спорта юратакансене.

Ăс паракансен сăмахĕсене пĕр хăлхаран кĕртсе тепринчен кăларса яракан ача пулман Женя. Шав малалла ăнтăлнă.

Кĕçех хĕрӳ тупăшусене çӳреме тытăннă. Республика ăмăртăвĕсенче яланах пĕрремĕш пулнă çамрăк Раççейри ăмăртусенче те çĕнтерӳçĕсен йышне кĕнĕ. Чăн та, Карăклă шкулĕн ятне юлташĕсемпе пĕрле çӳлте тытнă.

– Çитĕнĕве нихăçан та пĕччен тăваймăн. Кашниншĕн тренерсем тăрăшмасан çĕнтерӳ картлашки çине те хăпарайман пулăттăмăр. Çавăнпа та пирĕншĕн хыпса çунакан мĕн пур педагога тав сăмахĕ калатăп, – тенĕ Женя кашни ăмăрту хыççăн хăпартланса.

Пушă вăхăтра йывăçпа каскаласа тĕрлĕ япала ăсталама кăмăллана харсăр арçын ача.

– Аллу ылтăн çав, пултаратăн, – тенĕ ăна пĕри те тепри хавхалантарса та ырласа.

– Улми йывăççинчен аякка ӳкнине камăн пахчинче курнă эсир? – тӳрех хуравланă Женя мăнаçланса.

...Ашшĕне хывнă çав маттур каччă. Юратнă çынни пулăшса пынăран тĕрлĕ савăт-сапа ăсталама вĕреннĕ те Женя.

– Атте çак тарана çитсе республикăри утмăл чиркĕве тĕрлĕ эрешпе хитрелетнĕ. Унăн ĕçĕсемпе пурте кăмăллă, тав сăмахĕсем каласа пĕтереймеççĕ. Паллах, çакă ăна кулленхи пурнăçра хавхалантарать, çунат хуштарать, – тет яш тулли кăмăлтан.

...Çук, шкултан пĕрре те тухса каяс килмест каччăн. Ара, вун пĕр çул пĕр килти пек килĕштерсе пурăннă çамрăксенчен уйрăласси çăмăл мар. Йывăрлăхĕсене те пĕрле чăтса ирттернĕ, савăнăçĕсене те ушкăнпа пайланă вăхăтсене самантрах епле асран кăларăн?

Уйрăмах спорт ăмăртăвĕсене çӳренине чĕререн савăнса аса илет мал ĕмĕтлĕ йĕкĕт.

– Тащи хулана та çитсе куртăмăр, унти çамрăксен ӳсĕмĕсемпе паллашрăмăр. Тата та çӳрес килетчĕ тĕрлĕ ăмăртăва, шел, шкулпа сыв пуллашма вăхăт çитрĕ. Пирĕн вырăна урăххисем юлни те чĕререн савăнтарать. Акă çиччĕмĕшĕнчи Алена Тимофеевăпа виççĕмĕшĕнчи Яна Георгиева та тĕрлĕ ăмăртуран пĕрре мар çитĕнӳпе таврăнчĕç. Пĕр тупăшура Яна парнесемпе пĕрле автан выляса илнишĕн те чунтан хĕпĕртерĕмĕр. Хĕр ачасем çаврăнăçуллă та хастар пулни кăмăла çĕклет», – тет паянхи кун патшалăх экзаменĕсене çав тери типтерлĕн хатĕрленекен Женя Орлов.

Элиза ВАЛАНС

Чăваш ташши: алă чĕлхи

("Аххаяс" ташă тĕслĕхĕпе)

Чăваш халăх хореографи искусствипе икĕ жанра пайланать: вăйă (уяв) карти тата ташă. Жанрсем хăйсем тытăмлă тĕссем çине уйрăлаççĕ. Уяв картинче – юрă карти, ташă карти, вăйă карти, карта вăййисем; ташăра – пĕччен е мăшăрпа ташлани, хĕрарăмсен ташши, йышпа ташлани, чĕнсе кăларса е ăмăртса ташлани. Никĕсли те чи авалхи – вăйă (уяв) карти Уяв-савăнăçпа та савăк кăмăлпа çеç çыхăнман ташă, йăла-йĕркере те – асăнни таранчченех – пĕлтерĕшлĕ вăл.

Сцена çинче чăваш ташши, халăх ташши тесе кăтартакан номерсем ытларах чух калăпланă (стандартланă) ташă-вăйă çеç. «Халăх хусканăвне тĕпе хывса, ӳт-пĕве мĕнле тытмаллине шута илсе тунă» тесе хаклаççĕ çав ташăсене. Чăннипе вара калăпланă ташă-вăйă (танцы-пляски) халăх ташши хăватне аякран çеç палăртать. Унăн хевти-ытарлăхне палăртма тăван халăхăн йăлаллă хореографине тĕпчеменни те такăнтарать. Халăх ташшин никĕсĕ мĕнне чухлакан çын сахал, балетмейстерсемпе хормейстерсене вара вăл пит кирлех те мар, унсăрăнах ташлама пулать: наци тумне тăхăнтартсан темле ташă та «халăхланать»! Тăван культурăра сăмахçăсем (фольклористсем) тата тăван чĕлхепе литературине вĕрентекенсем пысăк вырăн йышăннине шута илсен, вĕсен та паянхи кун халăх ташшин никĕсне теори шайĕнче те пулин пĕлмеллех тесе каламалла.

Хореографи культурине сиен кӳрекен тепĕр пулăм – абстрактлă «чăваш ташши». Ăна вырăн-тăрăхăн эреветне (колоритне) шута илмесĕр лартаççĕ. Тăван халăхăн кашни ушкăнĕн хăйĕн хускану чĕлхи пур – абстрактлă ташăра вара вăл кирлĕ те мар. Юлашки вăхăтра «хальхи тухăç ташши» текенни те анлă сарăлчĕ. Шкулти уявсенче те çамрăк хĕрсем çара хырăм çавăрттарса темĕнле «чăваш ташши ташлаççĕ. Спортран, уйрăмах гимнастикăран, кĕнĕ хускану-сем те «халăх ташшинче» вăй илсе пыраççĕ. Эстрадăланă спорт хусканăвĕсем çамрăксене хăйсене те килĕшеççĕ – çакна та пытарар мар.

Çĕнĕлĕхсемпе тултарса хунă хальхи ташă вара халăх ташшин евĕрлĕхне кăтартакан хускануcене мантарать, йăлайĕркепе, мешехепе çыхăннă ташăсене пăчлантарать. Çавăнпа та халăх искусствине аталантарас ыйтура ача-пăча тата çамрăксен хореографийĕ питĕ пĕлтерĕшлĕ. Çамрăк ăрăва фольклор пултарулăхне, аваллăх ытарлăхне, хускануcен кун-çулне ăнлантарсан – чăваш ташши тĕрĕс çулпа каясси пирки шанма пулать.

Тухăç Европа халăхĕсен ташшинче тĕп вырăнта – ура мĕнле хускални. Алă, кĕлетке хусканăвĕсене вара урасене аккомпанилени çеç тесе хакламалла. Вăтам Ази, Тухăç çĕршывĕсенче алăсемпе кĕлетке хусканăвĕсем малти вырăнта, вĕсен пĕрлешĕвĕ ташă эрешне те хывать, хускану сăнарлăхне те палăртать. Чăваш ташшинче хускану сăнарлăхне алăсене кирлĕ пек тытса урасемпе тикĕссĕн ярăнтарса – шуçса – палăртаççĕ. Халăх ташшинче ритм питĕ пĕлтерĕшлĕ, вăл кĕвĕ-çемĕ янăравĕнче çеç мар, ташлакансем тапăртатнинче те, алă çупнинче те, такмак каланинче те палăрса тăрать.

Уйрăмах çакна асăрхаттармалла: кĕлетке хусканăвĕн чĕлхи-юрринче чăваш ташшисенче пуринче те курăмлă 4 пиçĕк (пластичный) элемент пур. Вĕсем тăван çут çанталăк ытамĕнче иртекен пурнăçа ытарлă мифологи тĕлĕшĕнчен ăнлантараççĕ темелле. Чăваш ташшин 4 пиçĕк элеменчĕ:

шуçса – урасене тикĕссĕн ярăнтарни. Çак пиçĕк элемент çĕлен шунине сăнарлать. Çĕлен – амалăх пуçламăшĕ. Чăваш хĕрарăмĕн тумтирĕ амалăх тытăмĕллĕ, çавăнпа тенкĕ эрешсене çĕлен хуппи тесе йышăнма пулать;

таптам – тапăртатса ташлани (урасемпе çаптарни). Аваллăх енчен таптам – чĕр чунсемпе кайăксен утти-хусканăвĕ. Ытларах чух çăткăн вĕçен кайăксене сăнарлани. Сакраллăх енчен вара урасемпе çаптарни – çĕр-аннепе калаçни;

çупă – ал çупни. Çак чĕлхен авалхи сийĕ кайăк туйне сăнарлать, вĕçен кайăксем çуначĕсене çапса мăшăр шыранине палăртать. Ал çупни каярахпа ăрăм-юмра сыхча пĕлтерĕшне те йышăннă: çупăм сасси усала хăратать;

çаврăну – пĕр вырăнта е утса çаврăнни. Чăваш ташшине хĕрарăм çаврăннипе пуçлать те çаврăннипех вĕçлет. Çаврăну ташша çăмăллăх тата хăвăртлăх кӳрет. Сакраллăх енчен илсен – çаврăнни уçлăхăн пур сийĕсене те тухса кĕнине, пĕрлештернине пĕлтерет.

Ташă эрешĕнче алăсене мĕнле тытасси те питĕ пĕлтерĕшлĕ. Халăх хореографийĕнче алă чĕлхи 6 тĕрлĕ. Чăвашсем аслă уçлăха çут тĕнче, аялти тата çӳлти тĕнчесем çине чикĕлесе уйăрнă. Ташăра алăсене мĕнле тытни шăпах çак курăмпа çыхăннă.

Пĕрремĕшĕ. Алăсене сарса çĕкленĕ, вĕсем чавсара хуçланнă, пӳрнесем куçсемпе – пĕр тан. Çак ал тытăм анатри чăваш ташшисенче анлă сарăлнă. Чăвашсен урăх этноушкăнĕсенче те унăн элеменчĕсем, пайрăшĕсем тĕл пулаççĕ.

Алăсене çӳле çĕклени тарăн та уйрăм пĕлтерĕшлĕ. Çакăн манерлĕ ал хусканăвне дакота йăхĕнчи индейсен ятарлă ташшинче курма пулать: «пăсăлман хĕр-упраçсем таса-сăвап юпа патне пырса ăна сĕртĕнеççĕ те сылтăм аллине

хĕвеле хирĕç çĕклесе юпа кутне хунă бизон пуç шăммине пуç таяççĕ». Ытти этнографи материалĕсенче тĕл пулать çак ал хускалу. «Браунди тата динка (Тухăç Африка) йăхĕнчи хĕрарăмсем чĕр чун мăйракисене кăтартнă чух аллисене çĕклесе-хуçлатса ташлаççĕ». Фараонсем влаça киличенхи сĕм авалхи Египетра вара «енчен те алă тытăмĕпе мăйракасене кăтартнă пулсан, пӳрнесемпе усă курасси ытларах чух кайăк е çĕлен пуçĕсене кăтартнипе çыхăннă пулнă». Амратра тупнă ташлакан кĕлеткен аллисем шăпах «çĕлен шăввиллĕ». Çак ал хусканăвĕн пĕлтерĕшне скифсен çĕлентĕш турри те палăртать: хавхапа килĕшӳллĕн, скифсем хăйсен йăх-тымарне Гераклтан тата çурма çĕлен хĕртен кăлараççĕ.

Çӳле çĕкленĕ алăсем мĕне пĕлтерни паллă: турăсем пурăнакан çӳлти тĕнче патне туртăнни çакă. «Аххаяс» чăваш ташшинче куçпа тан çĕкленĕ алăсем тата виççĕллетнĕ пӳрнесем çак авалхи йĕрсене çирĕплетсе параççĕ, алă хускanăвĕсем шăпах «çĕлен пуçĕсем» вылянине кăтартаççĕ. Чăваш йăли-йĕркинче тухăça пăхса хĕвеле сума суса алă çĕклесси хĕвеле пуç çапнипе те, киремете чысланипе те çыхăннă.

Иккĕмĕшĕ. Чавсаласа хуçлатнă алăсене айккинелле çĕкленĕ, ал тупанĕсем кăкăр умĕнче (кăкăр ерешĕсене тытса тăнă майлăн). Çак хускану пĕрремĕш ал тытăмĕн аталанăвĕ. Сĕм авалхи Египетри ташă тĕсĕсенче тĕл пулать вăл – алăсене кăкăр тĕлĕнче е хырăм çинче тытни – ритуал хускамăн (позăн) евĕрлĕхĕ: «çĕленленĕ» ал вылявĕпе кăкăрсене тытса тăраççĕ. «Аххаяс» ташăра алăсем çакнă эрешсене тытнă пек хускалаççĕ, тĕрĕссипе вара вĕсем çĕлен шунине палăртаççĕ. Ташăра çĕлен мĕнле шуни курăмлă пултăр тесе ташă пиçĕкĕ те питĕ евĕрлĕ: ташланă чух шуса утни – шуçса – çĕлен хусканăвĕпе çыхăннă. Ал хускамĕн никĕсĕнченех пуç тайнисем те – айăплăн, парăннăн, сумлăн, тавлăн, суннăн пуç тайнисем тухаççĕ. Çак пиçĕк хускануçем чăваш ташшин хореографи юмĕнче ертӳллĕ тата курăмлă.

Виççĕмĕшĕ. Алăсене чавсара хуçлатнă, пӳрнесене чăмăртанă та ал лапписене пилĕкрен тӳнтерлетсе тытнă. Несĕлсен аслă космос куравĕпе килĕшӳллĕн, этем кĕлетки – тĕнче уçлăхĕ, пилĕк вара – вăтам тĕнче, çĕр пичĕ. Алăсене çапла тытни арлăх-хĕрарăмлăха, илемачашлăха сăнарлать, пурнăç чăн тĕнчере иртнине кăтартать. Пилĕкленĕ алă хальхи ташăсен пиçĕк анлăшĕнче чиперлĕхĕн, чĕневлĕхĕн элеменчĕ шутланать. Çак хускам чăваш ташшисенче яланах тĕл пулать, ытларах унпа хĕрарăмсем усă кураççĕ. Хĕрарăмсем утса тухса ташласан вĕсен ирĕклĕхĕ, сăпайлăхĕ, мăн кăмăллăхĕ куç тулли. Енчен те мăшăрланса ташша ярсан тупăшу-ăмăрту пуçланать. Виççĕмĕш элемент тĕнчери халăхсен ташшисенче пур, çакă чăваш тĕнчи тĕнче культурипе питĕ тачă кăвапаланнине пĕлтерет.

Тăваттăмĕшĕ. Виççĕмĕш хускамри алăсем çĕнĕ тытăма куçни ку. Сулахай алă тӳнтер енпе пилĕк çинче – çĕр питне тытнă, сылтăм алла вара ирĕклĕн янă, вăл кĕлеткепе тачăланса усăнса тăрать. Сăнарпаллăлăх витĕмĕпе, çак хускам хире-хирĕçлĕхсен парадигмине сăнлать: аялти-çӳлти, тухăç-анăç, пурнăç-вилĕм, çутă-тĕттĕм, сылтăм-сулахай тата ыт.те. Хореографи анлăшне шута илсе çак сăнарпаллăха сулахайпа сылтăм хирĕç тăрăвне кăтартни тесе шутламалла. Сулахайăи – ырă мар пĕлтерĕшлĕ, усал-тĕсел шăпах сулахайра пытанать. Сылтăмми – ырă пĕлтерĕшлĕ, пирĕшти-управçă сылтăм хул пуççи хыçĕнче тăрать. Чăваш хĕрарăмĕсем ĕлĕк-авал хăйсен ташшисенче аллисене çавăрттарса-выляттарса мифологипе тĕнче тытăмĕн пĕрлĕхĕн чĕлхине кăтартма тăрăшнă тесе те калас килет.

Паянхи кун тăваттăмĕш ал хускамне йăла-йĕркене сыхласа хăварассипе çыхăнтараççĕ: мешехесене пирĕшти-управçăсем тата ырă турăсем панă. Христианлăхра, тĕн ӳнерлĕхĕнче тамăка сулахайра кăтартаççĕ, çăтмаха – сылтăмра. Культура анлăшĕнче – хĕрарăмлăх пуçламăшĕ сулахайра, вăл вара яланах арçынлăх пуçламăшĕпе хирĕçлĕ. Хальхи чăваш ташши халăх тĕнче курăмне çеç мар, иртнин, паянхин тата пулассин пурнăç тытăмĕллĕ принципĕсене те кăтартма тăрăшать.

Пиллĕкмĕшĕ. Вăл тăваттăмĕш хускамăн тĕкĕрлĕ варианчĕ: сылтăм алă пилĕкрен тӳнтер енпе тытнă, сулахайăи вара ирĕклĕн усăнса тăрать. Асăрхаттармалла: 4-мĕшпе 5-мĕш хускамсене уйрăммăн пăхма юрамасть, вĕсем пĕрпĕринпе таччăн çыхăннă. Енчен те лайăххи пур пулсан, начарри те тупăнать, ырă усала çĕнтерет. Ăнланулăх антитези: хĕвел – уйăх, тӳпе – çĕр, çĕр – шыв тата ыт.те. Хирĕç курăм сăнчăрĕ вăрăм, вăл пирĕн пурнăçа та, ăс-тăна та явалать, пурнăç (пуçламăшĕ) – вилĕм (вĕçĕ), хĕрарăм – арçын, ашшĕ – ывăлĕ, ашшĕ ăратни – амăшĕ ăратни тата çавнашкалли. Ташлакан мăшăрсемшĕн «сулахай – сылтăм шайлашу» чăн малтан çакăн пек пĕлтерĕшлĕ: сылтăм – арçын енчи ăрат-тăван, сулахай – хĕрарăм енчи ăрат-тăван (кунта усаллăх сĕмĕ çук). 4-5-мĕш хускамсем ташша мăшăрсем çеç мар, пур рат-тăван та тухнине палăртаççĕ.

Улттăмĕшĕ. Алăсене ирĕклĕн усни. Çак хускам çĕр тĕпĕнчи тĕнчен усал чĕмсусисенчен сыхлать, вĕсене чарать. 4-5-мĕш ал хусканăвĕсемпе тачă сыхăнура тăраканскер, ташăра çак хускам рат-тăванлăха упрама, чăваш чунне сыхласа аталантарма чĕнет. Паянхи хыт тĕнче шайĕпе виççен, «Аххаяс» ташă чăваш тĕнчине – халăхне тата культурине – упраса хăварма йыхравлать, çак ăнтăлăва палăртать.

Асра тытмалла: ташă – ирĕклĕ, çав вăхăтрах харпăр сĕмлĕ культура, çын тата халăх мĕнле аталаннине яр кăтартакан сăнар-паллăлăх.

Ташă хусканăвĕн, алă вылявĕн чи авалхи сĕмĕсене, пĕлтерĕшĕсене, мĕне сăнарланисене тĕрĕссипе пĕлместпĕр те эпир. Çапах та сисĕм шайĕнче чи авалхи сий юлнах. Эпĕ темле халăх ташшисене те курнă, вĕсенче алă вылявĕ яланах пĕлтерĕшлĕ, ахаль пустуй суллашни çук, пурте вырăнлă, пĕлтерĕшлĕ. Манăн шухăшпа, эпир алă чĕлхин пĕлтерĕшне маннă пулин те, ал хусканăвĕн вылявне вара манăçман, сĕм авалхи хусканусем паян кунченех чĕрĕ.

Ташă искусстви хăй тĕллĕн уйрăммăн пулмасть те, аталанмасть те. Вăл халăх юррипе, сăмахлăхĕпе, хальхи вăхăтра литературăпа та, таччăн пĕтĕссе аталанать. Çак аталанăвăн ташă культурин авалхи сийне никĕс пек упраса хăварmалла, ăна улăштармалла мар, çĕнĕ элементсене аваллăхран кăлармалла, ташăра вĕсен пĕр-пĕринпе çыпăçăнса-шайлашăнса тăмалла.

«Иртнипе малашлăх чиккинче» проект ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.

Владимир МИЛЮТИН

Улмуççи

Хула. Çуркунне. Вокзал. Халăх, халăх, таçта васкакан халăх.

Темле сасă сăрхăнса кĕчĕ хăлхана.

– Эй-йей-йей, ăçта васкатăн эсĕ, хĕр пĕрчи-и?! – тени илтĕнсе кайрĕ таçтан. – Пăхса ил ĕнтĕ ман çине. Сывлăх сунсам!

Такам каласать манпа. Паллана сас мар пек. Пĕчĕк ача сасси.

Эпĕ вара, тĕлĕннипе, кам чĕннине пĕлеймесĕр, тавралла именчĕклĕн сăнарăм. Мĕн-ха ку?! Çынсем хушшинче мана чĕнекен çук, никам та пăхмасть те ман çине, анчах... Анчах санăн илемлĕ, çепĕç сассу хăлхара илтĕнсех тăрать. «Хе-хе-хей, эпĕ ку-у! Сăнарах пăх ман çине-е-е! Умăнтах эпĕ!»

Ак, тĕлĕнтермĕш! Чăнласах илтетĕп такамăн сассине. Чăнах та, такам чĕнет мана. Ĕненетĕр-и, ĕненместĕр-и – ăнлантăм хама мĕн чĕннине. Йы-вăç!!! Йывăç каласать манпа!

Ман умра пыракан такам кутамкка çакнă. Унта вара çап-çамрăк улмуççи. Кутамккаран пан улми йывăçĕн виçĕ юппи курăнса пырать. Мĕнле сортли-ши? Ăçта кайма пуçтарăннă-ши ку черчен ӳсен-тăран? «Ăçта илсе каяççĕ-ши ĕнтĕ ăна?» – тесе ыйтмалла та – чĕлхе çаврăнмасть. Тем тесен те улмуççи хăй тĕллĕн таçта кайма тухнă, кутамккаллă çынни вара ăна юлташ кăна пырать.

Тата... Хулари ытти этем хушшинче мĕнле асăрхама пултарчĕ-ши мана панулми хунавĕ?!

– Салам, пĕчерукăм, – терĕм эпĕ те сана асăрхасан. Пĕчĕкскерĕм тесе калас вырăнне çапла чĕнтĕм ĕнтĕ – пĕчерукăм. Сан çине ытарайми пăхрăм. Санăн кăна мар, хамăн та питĕ каласас, паллашас килчĕ санпа. Ахальтен чĕнтĕн-им вара эсĕ пĕр мана çеç çавăн чухлĕ халăх хушшинчен?! Ахальтен мар. Санăн та апла питĕ каласас килет манпа.

Шухăшласан, тĕлĕнмелле: эпĕ – çын, эсĕ вара – йывăç. Анчах та мĕн тĕл пултарчĕ-ха пире иксĕмĕре çак нушаллă тĕнчере? Мĕн?! Тен, пĕр пек чунсем пирĕн?! Апла пулсан, эсĕ чĕрĕ – йывăç! Эсĕ – манăн чун тăван!

Санăн та çынсем пекех хăвăн кун-çулу, ĕмĕрӳ. Анчах та... Мĕнле пулĕ-ши санăн шăпу, йы-вă-çăм?! Мĕн тери телейлĕ пултарас килет манăн сана-а!!! Халĕ вара эсĕ пурнăçри вырăнна та тупайман-ха. Паян пыратăн кутамккара ларса, çурăм хыçĕнче. Эпĕ илтнĕ пек илтет-ши ĕнтĕ сана хуçу? Е эсĕ уншăн ахаль улмуççи çеç-ши?

Çук, пулĕ. Пăх-ха, сана кутамккине мĕн тери тирпейлĕ вырнаçтарса лартнă. Этемми сăнĕ-кĕлеткипе те йĕркеллĕ çын пек туйăнать. Апла, чун тăванăм, ан хăра: вĕçтер малалла эсĕ те хуçупа пĕрле. Санăн лартăнмалли вырăна – çитес çĕре çитмелле, çав вырăнта ӳссе çитĕнмелле. «Манăн пурĕ те виçĕ турат çеç», – тесе ан кулян. Пурнăç пуçланать кăна, ӳсме тытăнман та-ха эсĕ. Малашне шутласа кăлармалла мар пулĕ-ха турат йышне.

...Ӳсĕн эсĕ уçă çĕрте, хĕвел питтинче саркаланса, хĕвел çутипе киленсе. Çимĕçӳсем вара – пан улмийӳсем – туратсем йăтса ларайми пулĕç-ха. Сĕтеклĕ, çаврака, нар пек хĕрлĕ пан улмийӳсем илемĕпе çынсен куçĕсене савăнтарĕç.

Эсĕ ĕнен, курăн ак, йăлтах çавăн пекех пулса тухĕ. Ĕнен те – ан кулян! Пурнăç тытăнать кăна-ха! Эх, тăванăм, чипер юл. Телейлĕ пултăр çулу... Манăн та васкамалла. Тен, курнăçăпăр-ха хăçан та пулсан. Тен, сан сĕтеклĕ, техĕмлĕ çимĕçне – пылпа тулнă улмуна тутанса та пăхăп, э? Пурнăç урапи вĕт вăл малаллах шăвать, таçта та илсе çитерет... Апла, улмуççи, ӳс васкаса, çитĕн. Тĕл пуличче-е-ен! Чун тăвансем пĕр-пĕрне çухатмаççĕ. Апла илсе çитеретех сукмак сан патна, панулмиçĕм.

Любовь ИВАНОВА

Редакцирен. Любовь Васильевна Шупашкарти 11-мĕш шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет. Журналра пичетленекен эссе абстрактлăхĕпе тăван чĕлхешĕн кăткăс пек туйăнать малтан. Кайран вара ăнланса илетĕн: чăваш сăмахлăхĕнче абстрактлăх, аллегори питĕ пысăк вырăн йышăнать. Этем чунĕ çут çанталăк умĕнче пысăк яваплăхра пулнине тăван культура уçăмлăн кăтартать. Пăхăр-ха йĕри-тавра: ăнтăлу çулĕпе шав малалла ĕрĕхекен этем тавралăха çӳп-çап айне тунă. Хăйне çут çанталăка чысра та тирпейре тытма туса янине манса пырать иккен çын. Ан ӳркенĕр, итлĕр – мĕн каласçĕ йывăçсем пирĕн пирки...

Çунса тăракан чунлисен ЖУРНАЛĔ

Çамрăксем – хастарсем тетпĕр эпир. Вĕсем темĕн те пĕлме юратаççĕ, яланах малта, чунĕсемпе çунса тăраççĕ, ĕçĕсемпе малашлăха сукмак хываççĕ. Тĕрĕсех ку. Çак тĕрĕслĕхе вĕçне çити ĕненсе ларт-сан – «Самант» тиражĕ сахалтан та 10 пин пулмалла. Чунĕпе ватăлма пĕлмен çулланнисене хушсан вара çак йыша?

Чăвашсен чи паллă халапĕ – тăван халăх акăш-макăш ĕçчен, ĕçшĕн чăтма çук çунса тăрать те-ни. Чăнлăх тĕрлĕрен. Наянлăха пытарнăран хамăр ĕçчен те маттур тесе мухтани те пур. Пур пĕр килĕшĕпĕр тĕнче пĕлтерĕшлĕ аксиомăпа: чăваш – хăрушла ĕçчен халăх.

Çулталăк каялла «Самантра» (6№, 1913) «Ухмах та ĕçлеме питĕ юратать» статья пичетленнĕччĕ. Çиелтен аса илер-ха ăна. Паян эпир шумерсе-не лайăх пĕлетпĕр, вĕсем этемлĕхĕн пĕрремĕш вĕрентекенĕсем тесе йышăнатпăр. Тен, шумерсем-пе пĕрлех-юнашарах истори аниче ырми-канми ĕçченлĕхĕпе вĕсенчен 100 хут ирттерекен халăхсем тар тăкнă? Камсем пулнă вĕсем – эпир пĕлместпĕр, вĕсем йĕр хăварман, этемлĕх çӳпçине нимĕн те хы-вайман. Аталаннă çĕр-шывсемпе юнашар пурăннă, ĕçченлĕхĕпе хастар пулнă халăхсене пит ăм-санмаллиех те çук. Малкай çĕр-шывсем шăпах вĕсене ĕнтĕ чĕлхесĕр, чикеленсе кайса ĕçле-кен чурасем тума юратнă.

Çĕр-шыв аталанасси яланах пурнăç ну-май енлĕхĕпе çыхăннă: ăçта ĕçе тем тĕрлĕн те пурнăçлама май паракан пĕлӳсемшĕн çул уçă – унта аталану. Ухмах та ĕçлеме питĕ юратать пулин те – ăса кĕреймест. Культура аталанăвĕсĕр пурнăç малалла каяймасть. Вăл примитивлăхрах юлать. Çакнашкал шухăшсем каланăччĕ «Самант».

Çĕр-шыв кăна мар, халăх аталанăвĕ те ну-май енлĕх саккунĕсене пăхăнать. Ĕçченлĕх аталанăвĕн кăтартăвĕ мар, вăл пурнăç йĕрки – ахаль норма. Юлхав-наян пур пĕр çӳле çĕкленеймест, çавăнпа ĕçлеме юрататпăр тени ниме те пĕлтермест: чылай чух çакă – ахаль мухтанни тата çын ĕретлĕ нимĕн те тума пĕлменнине пытарни. Тӳррипе каласан, чăвашсем ăс-тăн ĕçĕн хăватне пĕлмеççĕ те, чухла-маççĕ те. Тĕнчене çавăраканни вара – ăс-тăн. Эпир çакна ăнланма та тытăнман-ха. Ăнланасси вара пĕчĕккĕн пырать. «Самант» журнал та кăшт пулă-шать çак ыйтура.

Ăнтăлăвăн, малкайлăхăн, ĕмĕтлĕхĕн кăтартăвĕ – чунпа çунса тăни. Унсăрăн ниепле те малалла ка-яймастăн. Чунпа çунса тăракансем нумай-и вара? Юлашки çулсенче çынсене чун пушлăхĕн хумĕ хуп-ларĕ. Нимĕн те интереслĕ мар, нимĕн те илĕртмест. Витене хупнă выльăх пек пурăнма тытăнтăмăр. Чун апачĕ ют пулса тăчĕ. «Мĕн тума кирлĕ çырăнтару? Мĕн тума кирлĕ хаçат-журнал?» – тесе çеç ыйтаççĕ чылайăшĕ. Çĕр-шывĕпех çынсене зомбилеме тытăн-нăнах туйăнать хăш чух.

Сӳннисем хыççăн кайсан – хырăмшăн тата ӳтшĕн çеç пурăнмалла. Калаçма пĕлекен чĕр чун шайĕнче пурăннин пуласлăхĕ пур-ши? Тем пек самăрăлсан та – слонран йывăр пулаймастăн.

Çавăнпа та: кам сӳнесшĕн мар – вăл «Самантпа»! «Самантпа» пулас тесен – ăна çырăнмалла. Малалла, туссем!

«Самант» çырăнмасăр çулла çитмест!

Кăларăмсем	Çырăнтару хакĕсем				
	Почта уйрăмĕсенче		«Чăваш пичет» киоскĕсенче	«Советская Чувашия» киоскĕсенче	Редакцире
	акци вăхăтĕнче	акци хыççăн			
Тантăш	271-44	289-44	132	132	90
Самант	157-02	181-02	156	156	120
Тетте	125-52	143-52	111	111	90

Юмахри кăвакал чёппи

Пёрремёш юратăвăн асамне нимёнпе те танлаштараймăн. Çут тёнчене тепёр хут çурални тесе каласан çеç ăна...

Манăн пёрремёш юратăвăн асёнче, ятне-шывне те пёлмен каччă куçёнче эпё мёнлерех сăнарлăн юлни пирки иккёленместёп те... Пахчана лартакан катемпирен кăшт хитререх юлнă тейёпёр.

Халь ёнтё эпё урăх çын, шёвёр кёлёсемпе арçын чунне çеç мар, Çёр чăмăрне те витёр шăтарса кăларасла ярăнса утатăп пурнăçпа. Ман çине арçынсем куç çиçтерсе пăхаççё. Сăн-пит тата кёлетке илемё мана яланах шанчăклăх кӳрет: пёлетёп – эпё хитре хёрарăм! Çавăнпа хама нимёнле снаряд та витес çук броня тăхăннă танк пекех тытатăп.

Пёрремёш юрату мённе туйса илнё чухне вара эпё ун пек марччё. Шăпа шеллемерё ун чух мана, кăмăла туптаса хурçăлатма йывăр лару-тăрăва кёртсе ӳкерчё. Вуланă пуль ёнте Ганс Христиан Андерсен çырнă «Нёрсёр кăвакал чёппи» юмаха? Шăп та лăп çавнашкал кăвакал чёппиччё эпё пёрремёш юрату асамён чаршавё уçăлсан. Нёрсёр чёпё малашнехи пурнăçра – темиçе çултанах – ытарайми шурă акăш пулса тăрасса никам та ёненместчё. Каккуй ыттисем – хам та ёненмен ун чух!

Асăмра яланлăхах юмахри принц пекех тăрса юлнă çамрăк каччăпа тёл пултарма мана пёр шелсёр шăпа синкерлё утăмсемпе илсе пычё.

Тухтăр юлташсем тем йăнăшнипе тата тем пăтраштарнăран мана туберкулезпа чирлё тесе шухăшларёç. Ёненетён ёнтё шурă халатлисене – вёсем вёт управçăпирёштисем пекех шурă-таса тумлă! Эпё нимёнпе те чирлеменни кайран тин паллă пулчё. Ун чух вара мана – пёве кёрсе пыракан хёр пёрчине – Шупашкара ăсатрёç. Туберкулезран сыватмалла терёç.

Больницăра концлагерьти пекех пурăнаттăмăр. Ниçта та уçăлма кăлармаççё. Çут çанталăк чӳрече пысăкăш ансăрланса ларчё, хёвел çути те тёксёмленчё. Савăнăç тарчё савăк çамрăклăхран. Чăваш халăхён шёкёр хулинче пурăнни сисёнместчё те – таçта тёрмери пек туяттăм хама.

Ун чухне халăх çёр-шывёпех Бразили сериалёсемпе юмланнă та ухмаха тухнă. Пурнăç йёрки те хёвел тухни-аннипе мар, чун сёрёмлё сериал пуçланни-пётнине кура тытăнса тăрать. «Хăрхăм пике Изаура», «Пуянсем те макăраççё» супăнь оперисем чăваш халăхне куç пăвсах пăрахрёç. «Ахаль Марье» сериал тытăнсан Виктория Руффо пек хитре те чаплă хёрарăм çут тёнчере пулман та пулас та çуккине чăвашсем кăна мар, Раççей халăхёсем те ёненсе лартрёç.

Тинёс леш енчи Бразилире пурăнакан Марье аппан асаплă пурнăçён нушине «çăмăллатма» эпир те телевизор умне пуçтарăнаттăмăр больницăра. Çавăн чухне куç тёлне пёр каччă лекме тытăнчё. Пёррехинче телевизор умёнче юнашарах лартăмăр унпа. Ас туса юлтăмăр пёр-пёрне. Тепёр кунне те çумлах лартăмăр. Вăл çепёççён калаçатчё манпа, юнашар вырăн пултăр тесе пукан та хатёрлесе хума тытăнчё кайран.

Вăл манран аслăрахчё. Ман çине ыттисенчен кăшт тимлёрех пăхнăранах çамрăк пуçăма çав каччăн сăнарё кёрсе те ларчё. Эпё – хёр пёрчи – каччăсем çине интереслесех пăхма тытăннă ёнтё, йёкёт шухăшё те кёнё чуна.

Хура сăран тапочки тăхăнса çӳретчё вăл. Халь ас тумастăп ёнтё – мён амакран çав тапочкисем асра юлнă? Юратса пăрахнă йёкёт çине куç сиктермесёр пăхса ларма çын умёнче аван мартан унăн тапочкийёсене сăнама юрататтăмччё. Вырăссем калашле: пулă çук чух рак та – пулă! Ялан çав каччăна курас килетчё манăн. Кураттăм та – чун лаш каятчё. Тёнчере тек нимён те кирлё марччё, больницăра тёрмери пек пурăннине те манса каяттăмччё.

Пётём Раççейёпех каç кӳлём телевизор умне Марье аппана çăвар карса куçран пăхса ларма пуçтарăнатчёç пулсан, çёр-шывёпе те пёр эпё çеç Виктория Руффопа кăсăкланмасăр, чуна кёрсе ларнă каччăпа тёл пулма пыраттăмччё.

Нуша пёччен çӳремест тесе тёрёсех асăрханă. Калама та аван мар та – пыйтланса кайрăмăр больницăра! Нумай шутласа тăмарёç: пире – хёр пёрчисене – шакла касрёç те ячёç! Кёрёс-мерёс халатсемпе çӳреме хăнăхнăччё ёнтё, халё вара тата пёр пёрчё çӳçсёр тăрса юлтăмăр. Пахчана лартакан катемпирен нимёнпе те кая мар, мана кунашкала курсан çерçи кăна мар, ăмăрт кайăк та сехри хăпнăран шалкăмланса ӳксе тек нихăçан та çунат çёклейми, вёçейми пулса тăрё.

Нимён те тăваймастăн. Телевизор курма тутăр çыхса пуçтарăнаттăмăр. Савнă каччăна кураттăмччё те – чунра мёнле çăмăл пулса каятчё, вăй хушăнатчё. Больницăна лекнишён те савăнма тытăнтăм: кунта илсе килмен пулсан çак каччăпа тёл пулаймастăмăрччё. Анчах телей ман нумая пымарё. Кăшт тăрсан тухтăрсем манăн пёрремёш юратăва килне ячёç. Тек тёл пулман эпё çав каччăпа, вăл мён ятлине те пёлместёп. Çук манăн пёрремёш юратăвăн ячё – çуккă.

Мана вăл пёчёк хёр ача вырăнне хурса пиччёшё пек пăхнă ёнтё – ăнланмалла. Урăхла пулма та пултарайман. Темёнле халат тăхăнса янă, пиçсе çитнё хёр-упраç пек пёвё-кёлеткипе хӳхёмленсе çитеймен, çамки çинченех – çӳçне шакла кастарнăран – çыхнă тутăрлă хёр пёрчи сăнарёпе юлтăм эпё çав каччăн асёнче. Касnă лартнă «нёрсёр кăвакал чёппи», анчах юмахра мар – пурнăçра! Тепёр пёр-ик çултанах эпё мёнле илемлё хёр пулса тăрасса тёшмёртнё-ши

Шупашкар сысни

«Самант» тусĕсенчен кашниех тухатмăш карчăксем пирки илтнĕ ĕнтĕ. Питĕ правур та сĕмсĕр вĕсем, çĕрлехи тӳпере çунатлă ракетăсем пек вĕçсе çӳреççĕ, ял хушшинче вара çитмен кĕтес хăвармаççĕ. Хăрушă тухатмăшсене хăратаканни те тĕнчипе те пирĕн «Самант» журнал кăна. Çавăнпа «Саманта» çырăнса илнисĕр пуçне, çĕрле урама тухнă чухне журнала пĕрле чиксе тухăр: темле усалтан та сыхлать вăл.

Тухатмăш карчăксем çаврăнмăшсем пулса тăнине те чылайăшĕ илтнĕ ĕнтĕ. Шур сысна пулса тăма питĕ юратаççĕ тет вĕсем. Çаврăнмăш сыснасем пирки тăван халăх тахçантанпах шавлать. Чăваш Ен историне (тен, Раççей патшалăхĕн кун çулне те) кĕрсе юлнă ĕç-пуçа Спиридон Михайлов этнограф 1855 çултах документласа панă. Янтуш çырса кăтартнине пĕр улăштармасăр чăвашла куçарса илсе парар.

СЫСНАНА СУД ТĂВАКАН ШУПАШКАРСЕМ

(Халăх калани)

Шупашкар çырми урлă хывнă кĕпер айĕнчен темĕнле сысна-çаврăнмăш сике-сике тухса иртен çӳрене шар-алхас кӳни çинчен сăмах-юмах сарăлнă хулара. Çав сысна мĕн пысăкăш, мĕнлерех шăртлă пулнине халăх ас туса юлнă та çаврăнмăш каллех хăратма тухсан ăна çавсенчен паллана. Хулара пурăнакан Селиванов улпутăн та çавнашкалах шăртлă, пысăкăшĕпе те çавăн пекех сысна пулнă килĕнче. Çынсем пĕррехинче кĕпер айĕнчен пысăк сысна тухнине асăрханă. Шупашкар халăхĕ ăна чăн-чăн çаврăнмăш вырăннех йышăннă та Селиванов сыснине полицие хăваласа кĕртнĕ. Сыснана сыхлама шанчăклă хурал тăратсах хупса хурсан – городничие систернĕ. Лешĕ, шалт тĕлĕннĕрен, полицие чăнахах та пынă, ытахаль сыснана курсан нимĕн каламасăр чĕр чун шăпине граждансен аллине шанса хăварнă.

Çаврăнмăшăн шар-алхасăвĕнчен йăлăхса çитнĕ граждансем Селиванов сыснине Хемницер юптарăвĕнчи кӳршĕсен садне кĕнĕ сысната хĕненĕ пекех хĕнеме тытăннă – хăшĕ патакпа, тепри турчкапа, лаханпа çапаканнисем те тупăннă. Шупашкарăн хисеплĕ халăхĕ ухмаха тухса кайнă, сысната хасаласа-айăпласа чутах леш тĕнчене ăсатман.

Çак вăхăтра Селиванов тарçисем улпут сысни таçта кайса кĕнине асăрханă та хула тăрăх шырама тухнă. Шыраса çӳренĕ чух хайхискерсем яваплă граждансем çаврăнмăш темле сысната тытнине, ăна полицие хупни çинчен пĕлнĕ. Унта çитеççĕ те тарçăсем – хуçин сыснине кураççĕ, граждансем вара вĕсене ĕненмеççĕ. Селиванов тарçи эшкерĕ, халăха сысна чăнах та вĕсен хуçин тесе ĕнентерме, граждансем пĕрле чĕр чуна улпут килне хăваласа килет. Селиванов сысни, тискеррĕн хĕнесе пĕтернĕскер, тӳрех витине, çурисем патне, вĕçтерсе кĕрет, лешсем вара амăшне курнă-курман часрах чĕччисене ĕмме тытăнаççĕ.

Çакна курсан тин граждансем сысна чăнласах сысна, нимĕнле çаврăнмăш та маррине ĕненнĕ тет.

Çак хавха-легенда С.Михайлов-Янтушăн кун çырав ĕçĕсемпе пĕрле упранса юлнă. Спиридон Михайлов заметкăра Хемницерăн «Икĕ кӳршĕ» юптарăвне аса илет. Иван Иванович Хемницер (1745-1784) – паллă çыравçă, куçаруçă, вăтам дворянсен кăмăл-сипетне палăртаканĕ, ăслайсен Академийĕн членĕ пулнă.

Шупашкарти витĕр куçлă юлташсене кашни утăма тимлĕн ярса пусма сунса – Льеж МУР

Ульяна ПИТАКОВА: " Пианино умне ларатăп та - чунра янăракан кĕвве инструментпа калатăп. Çавăн пек ансаттăн çырăнать кĕвĕ-çемĕ"

Чăваш наци конгресĕ йĕркелекен Пĕтĕм тĕнчери ят-сумлă (статуслă) «Кĕмĕл сасă» фестиваль кăçал 15-мĕш хут иртрĕ. Пултарулăх ăмăртăвĕн чĕнĕвĕ яланхи пекех чăваш тĕнчин пур кĕтессине те çитрĕ, Шурă Шупашкара кĕмĕл сасă тупăшăвне яшсемпе хĕрсем ăçтан кăна килмерĕç. Кăçал юрă-кĕвĕ ăмăртăвне 37 çамрăк хутшăнчĕ. Чăваш юррин Пĕтĕм тĕнчери фестивалĕн гран прине Патăрьел районĕн йĕкĕчĕ, Чăваш патшалăх культура институчĕн студенчĕ Сергей Лекерев тивĕçрĕ. Юрă-кĕвĕ ăмăртăвĕн лауреачĕсем: Ульяна Питакова – 1-мĕш вырăн, Кристина Николаева – 2-мĕш вырăн, Лилия Одинцова – 3 мĕш вырăн, Пушкăрт каччи Анатолий Ефимов – 3-мĕш вырăн.

Тусĕсене «Самант» Ульяна Питаковăпа паллаштарас терĕ. Хĕр-упраç Шупашкарти 10-мĕш шкулта 11 класра вĕренет. Кăçал алла аттестат илекен шкул ачи питĕ тăрăшуллă та хастар пулни пирки тĕнчипе те никам та иккĕ ленмест пулин те юрлама ăста хĕр пĕрчин сăнарне сăмахпа ӳкерсе кăтартар. Кам вĕренӳре малта – вăл пур çĕрте те пултаруллă, хастар, çитĕнӳрен çитĕнӳ патне пырать. Паянхи кун чăвашсем кашни килтех лаша усраманран çак янаварпа çыхăннă ваттисен сăмахĕ кивелнĕ тенине пĕлтермест. Ура çине тăнă-тăман ĕрĕхтерсе чупса çӳрекен тиха пирки ваттисем мĕн калани халĕ те тĕп-тĕрĕсех. Çапла вара, пулас çăлтăр ачаран паллă!

Гуманитари ăслайĕсемпе çыхăннă предметсене – истори, обществознани, правоведени килĕштерет Ульяна. Биологи, хими те – юратнă дисциплинăсем. Çапах та чи кăмăла каяканнисем вара – филологи предмечĕсем. Ульяна – чĕлхесен шалти тытăмĕн кĕввине туякан юрăçă. Вырăс, чăваш, ют чĕлхесене вĕреннĕ чухне усă куракан правилăсем пикешĕн сăвă йĕрки те юрă çаврăмĕ евĕрех янăраççĕ.

Кĕмĕл сасăллă чиперук сцена çине кăçал кăна пуçласа тухман ĕнтĕ. Пĕлмеллех – фестивале хутшăннисем пурте тенĕ пек сцена ăстисем: мĕн ачаран юрă-ташă тĕнчинче. Фестивалĕн жюри членĕ Юрий Зорин: «Пултарулăх ăмăртăвĕнче чи лайăххине палăртма питĕ кăткăс. Енчен те эпĕ пĕччен суйланă пулсан – «Кĕмĕл сасă» ят никама та лекместчĕ: тивĕçлисем çуккипе мар, пурте хисепе тивĕçрен», – тесе калани ахаль сăмах мар.

Çавăнпа Ульяна çĕнтерĕвне телей е шăпа вылявĕ тесе хаклаймăн, «Кĕмĕл сасă» фестивальте 1-мĕш вырăна тивĕçни – пултарулăх тата ăсталăх кăтартăвĕ. Чи малтанхи сцена ăнăçăвне те кăштах ас тăвать хĕр-упраç. Ун чухне ача садĕнчи вăтам ушкăна çӳренĕ вăл, сывлăха çирĕплетмелле текен хаваслă юрăпа тухнă халăх умне. Кĕвĕ-çемĕ вылявне туяканскер, юрă сиккине алла илнĕскер пĕр кăлтăксăр юрласа панă та ача садĕнчи концертра – куракансем алă çупса чутах унăн хăлхине хупласа хуман.

Музыка шкулĕнче 8 çул вĕреннĕ Ульяна. Çичĕ çул аккордеонпа каланă, кайран хорпа юрлас ăсталăха вĕреннĕ. Ачасемпе яшсен пултарулăхĕн керменĕнче 3 çул ĕнтĕ вокал ăсталăхне туптать. Пианинопа тĕрлĕ музыка çырма та маçтăр хĕр-упраç. Вун пилĕк çултанпа музыка çырать вăл. Мĕн çырнине никама та кăтартман-ха, хальлĕхе вăрттăнлăх тейĕпĕр. Пианино, аккордеон каласа кăна мар, хушăран алла домбра тытса та унăн черчен сассипе киленет Ульяна.

– Кĕвĕ-çемĕ мĕнле çуралать? Çак асамлăх-вăрттăнлăхăн тупсăмне «Самант» тусĕсене каласа кăтарт-ха. Тен, пулас композиторсем те пур вĕсен шутĕнче?

– Ним вăрттăнлăхĕ те çук унта. Тăрук, кĕтмен çĕртен, чунра кĕвĕ-çемĕ янрама тытăнать. Пианино умне ларатăп та чунра илтĕнекен кĕвве инструментпа калама тăрăшатăп. Çав вăхăтрах ăнланатăп: халĕ калакан кĕвве эпĕ малтан ниçта та илтмен, вăл ман чунра çуралнă. Çавăн пек ансаттăн çырăнать кĕвĕ-çемĕ.

– Хăшĕ-пĕрешĕн ансат пуль ĕнтĕ. Хамранах тĕслĕх илер: Чăваш Республикинчи чи çӳллĕ йывăçран кутăн çакса хуратпăр тесе хăратсан та – манран виçĕ нота çырасси пулмасть! Санăн вара чунра ытларах чухне мĕнлерех кĕвĕ янрать?

– Вылявĕпе – ритмĕпе – мĕнле кĕвĕ янрасси кăмăлтан килет. Хавас та шухă чух – хăвăрт вылявлă. Ăмăр кĕркуннехи тӳпе кунĕн-çĕрĕн çумăрпа куççулленнĕ вăхăтра лăпкă, çутă тунсăхлă музыка çырăнать. Кăмăл мĕнле пуласси çанталăкран çеç мар, пурнăç лару-тăрăвĕнчен, шкулти туссемпе вĕрентекенсенчен килет. Кăмăл ялан улшăнса тăрать теместĕп эпĕ, хăш чух настроени çукки пулкалать.

– «Кĕмĕл сасă» фестивале хутшăнма тахçанах тĕв тунăччĕ-и?

– Шухăш та пулман. Класс ертӳçи Лариса Анисимова, эпĕ лайăх юрланине пĕлекенскер, сĕнчĕ. Эпĕ чăвашла лайăх калаçатăп – акцентсăр, чăваш юррисене тахçанах юрлатăп. Пĕтĕм хăюлăха пуçтартăм та фестивале хутшăнас текенсене итлекен çĕре кайрăм. Çитрĕм те – унта Вячеслав Христофоров, Елена Османова тата Валерий Клементьев лара параççĕ! Çухалсах кайрăм. Килте атте-анне телевизорпа чăваш концерчĕсене пăхма кăмăллать, Христофорова, Османовăна, Клементьева эпĕ экран çинче тăтăшах курнă, юррисене илтнĕ, пултарулăхне те пĕлетĕп... Кунта вара вĕсем манăн умра нимĕн пулман пек ларaççĕ, итлесе пăхатпăр теççĕ. Юмахри пек! Вокал пултарулăхне тĕрĕслени чиперех иртрĕ, мана фестивале хутшăнма ирĕк пачĕç.

– Унччен маларах пултарулăх тупăшăвĕсене хутшăннă пуль?

– Хула шайĕнчи вокал-юрă ăмăртăвĕсене тахçантанпах çӳренĕ. Пулать вĕт çавăн пек: эпĕ яланах 2-3-мĕш вырăнсене йышăннă. Тӳре-жюри илĕртӳллĕ 1-мĕш вырăна темшĕн памастчĕ. Тем пек ăста юрласан та – санран чаплăрах юрлакансем яланах тупăнаççĕ: пурнăç çавăн пек!

– «Кĕмĕл сасă» фестивальте санăн 1-мĕш вырăн. Шăпа яни халь-

хинче сан майлă пулчĕ.

– Фестивале хутшăннисем хушшинче лайăх юрлакансем нумайччĕ. Тупăшуçăсен пурин те шайĕ пысăк. Манран аванрах та ăстарах юрăçсем нумай пек туйăннин ырă енĕсем те пур. Хăвна – кăмăлна тата вăйна – пĕр чăмăра пуçаратăн. Ăнланатăн: мала тухас тесен тăрăшмалла кăна мар – чунна кăларса хумалла. Сцена çине тухсан урăх тĕнчене лекетĕн, шухăшсемпе мар, туйăмсемпе пурăнатăн. Самантлăха хăвна кивелнĕ тĕнчене çĕнĕрен янăлакан ăста пек те туйса илетĕн. Номер вĕçленет те, каялла çĕр çине таврăнатăн та тин ăнланатăн: тата лайăхрах юрлама пултарнă эсĕ, чунна кăларса хурайман! Тепĕр тесен, ниçта нимĕнле кăлтăксăр номер çук, атту пулсан аталану та пулмастчĕ.

– «Кĕмĕл сасă» фестивале хутшăннисенчен кама та пулин: «Чи килĕшекенни çакă пулчĕ», – тесе хаклаятăн-и?

– Кристина Николаевăна. Вăл Шупашкар районĕнчен, фестивальте 2-мĕш вырăна тивĕçрĕ. Унăн халăх умне тухнă юрри питĕ килĕшрĕ. Кристина – хитре хĕр, сасси те сĕре илемлĕ. Саратов облаçĕнчен килнĕ Анна Никизова та кăмăла кайрĕ, вăл фестиваль номинацине тивĕçрĕ. Каларăм вĕт-ха, тупăшăва хутшăннисен пурин те ăсталăх шайĕ пысăк.

– «Самант» тусĕсене хăвăн юратнă юрăçусемпе паллаштар-ха.

– Чăвашсенчен – Елена Османова, вырăссенчен – Ани Лорен, Полина Гагарина. Ют çĕр-шыв юрăçисенчен – Глория Гейнор, Тина Тернер, Уитни Хьюстон.

– Композиторсене асăнас пулсан?

– Константин Меладзе, Максим Фадеев.

– Чăваш юрăçисен чи вăйлă та нихăçан парăнми конкуренчĕсене аса илер. Юрлакан кайăксем пирки сăмах. Юрăç туйăмĕпе вĕсен рейтингне тăвар.

– Чăн малтан – шăпчăк, кайран – шăнкăрч, вара – сар кайăк. Сар кайăк юрланине эпĕ нихăçан та илтмен. Анчах чăваш культуринче, юррисенче унăн сăнарĕ яланах пур: культура геройĕ темелле. Çавăнпа халăх асĕнчи сар кайăк – иволга – çут çанталăкри вĕçен кайăкпа тӳр килмест. Юмахсенчи-юрăсенчи сар кайăк – асамлă та юмлă, вăл ытарлă тĕнчен элчи. Пурнăçра вара сар кайăкне хăйне илтнĕ, курнă чăваш нумай-ши? Ăна телевизорпа курнине те ас тумастăп хам.

– Шупашкарта çамрăк юрăçсен ăсталăх шкулне уçрĕç тейĕпĕр. Пултарулăхна аталанма кам патне, хăш юрăç патне çӳреме кăмăл тунă пулăттăн?

– Фестивале хутшăнма симĕс çутă çутнă Елена Османова, Вячеслав Христофоров тата Валерий Клементьев класĕсене суйласа илĕттĕм. Августа Уляндина патĕнче вĕренни те питĕ аталантаруллă пулĕччĕ.

– Çап-çамрăк юрăçсенчен кама уйăрăпăр? Ун пекки тупăнатех пуль?

– Андрей Думилин. Çакна та каласа хăварас. Мĕн пĕчĕкрен эпĕ нумай юрăça пĕлетĕп. Тем каласан та, унччен юрăçсен ăсталăх шайĕ пысăкрахчĕ. Паян вара техника хатĕрĕсен чикесĕр ыр кăмăллăхне пула сасăсăрах юрлама пулать: вокал питех кирлĕ те мар. Пăшăрхантарать ку. Юрăçăн сцена çинче фонограммăпа мар, пуш хирте те, вăрманта та хăйĕн сассипе юрлама пĕлмелле!

– Пĕтĕм тĕнчери «Кĕмĕл сасă» фестивальте 1-мĕш вырăна тивĕçнĕшĕн мĕнле парнепе хавхалантарчĕç ăмăрту тӳрисем?

– Путевка пачĕç: çул çӳреве каймалла! Туркăлла – Шур тинĕс, пирĕнле – Вăта çĕр тинĕсĕ тăрăхне, çăтмаха аса илтерекен Антальйăна çитсе курмалла.

– Шывра ишме пĕлетĕн-и? Чăваш ваттисен сăмахне те манар мар: «Шыва кĕрсен дельфинсене шан та хăв та маххă ан пар!» – тесе вĕрентнĕ мĕн авалтан шур сухаллă несĕлсем Вăтаçĕр тинĕсĕ хĕррине каян-киленсене.

– Ишме-чăмма ăста. Шупашкар тинĕсне çитекенни тĕнче уçлăхĕнче те ниçта та çуккине тĕп-тĕрĕс пĕлетĕп пулин те ăна Вăтаçĕр тинĕсĕпе танлаштарса пăхмаллах ĕнтĕ.

– Турците, тахçан Византи империйĕ, тата маларах Хетти çĕр-шывĕ пулнă этемлĕх сăпкине кайса килни – чун çимĕçĕ. Тата ăçта кайса курас килет?

– Хальлĕхе чикĕ леш енче пулса курман эпĕ, çавăнпа Анăç Европăна хăрах куçпа та пулин курас килет. Франци, Англи, Германи, Австри – çитсе килесчĕ унта.

– Европа хыççăн?

– Латинла Америка илĕртет – Бразили, Аргентина, Мексика.

– Инçет Хĕвел Тухăç чĕнĕвне илтместĕп! Китай, Япони кăчăк туртмаççĕ-и?

– Вĕсен хăрушла пуян культури шиклентерет тейĕпĕр. Китая тата Японие кайса курмаллăх аталанса çитейменха эпĕ тесе шутлăпăр.

– Сан умăнта пĕччен ларатăп пулин те, журналăн тусĕ сем йышлă. Санпа халь сахалтан та пин çамрăк калаçрĕ тесе шухăшла. Мĕн сунатăн вĕсене?

– «Самант» тусĕсене чун-чĕререн ырлăх-сывлăх сунатăп. Пурнăçра мĕнле çул суйласа илнине пăхмасăр яланах хăюллă пулăр, малалла çирĕппĕн утăр. Нихăçан та, ниçта та никамран та, нимĕнрен те ан хăрăр, вара ĕмĕтсем сире чăнлăха илсе кайĕç. Кам кун-çулне музыкăпа çыхăнтарасшăн – вĕсене çакна каласшăн: хуть те мĕнле ăмăрту-конкурса та хутшăнăр, хăвăра итлеттерĕр, сассăра тĕрĕслеттерĕр. Енчен те ăнăçмарĕ, тупăшура нимĕнле вырăн та йышăнмарăр пулсан – çавăншăнах сăмса усса ан çӳрĕр. Малалла – шав малалла ăнтăлăр, ăсталăха ӳстерĕр те туптăр, хăвăра туллин кăтартмалли стиль шырăр – вара ăнăçу пулатех!

– Тавтапуç! Енчен те темиçе тусăмпа Ульяна патне хăнана кĕрсен пире ăста юрăçă мĕнпе сăйланă пулĕччĕ? Эпĕ ĕнтĕ: «Апат-çимĕç пĕçерме алă тата кăмăл пырать-и?» – тесе ыйтатăп пулмалла.

– Уявсенче эпĕ тĕрлĕ çимĕç хатĕрлеме питĕ кăмăллатăп. Апат тутлă пултăр тесен – тулли кăмăл кирлĕ, ун чухне ĕç каять. Вара эпир те юмахра пуртăран пăтă пĕçерекен салтакран нимĕнпе те кая мар. Хамăн юратнă çимĕç – икерчĕ. Варрине хумаллине вара тĕрлĕрен хатĕрлетĕп, аш-какайран тытăнса улма-çырла таранах. Темĕн те пĕçерме пĕлетĕп тесе пĕр пĕрчĕ мухтанмасăр калатăп.

– Сана вара, Ульяна, «Самант» тусĕсенчен пин ĕнчĕ пĕрчиллĕ салам! Малашне санăн ытарайми сассуна сцена çинче, радио-телевизорпа илтессе шанатпăр. Пурнăçунта ăнăçусем те çĕнтерӳсем кайри мала хур-кайăк пек черетленсе вĕçчĕр!

Владимир СТЕПАНОВ

Анаман Алена: Атăлçири Жанна д'Арк

«Атаман» сăмаха чăвашлатса «утаман» тетпĕр те – унăн пĕлтерĕшĕнчен пăрăнатпăр. Те утă çулакансен, те утă вăрлакансен, те утă сыхлакансен пуçлăхĕ пирки сăмах пынăн пулса тухать. «Атаман» – тĕрĕк сăмахĕ, пĕлтерĕшĕ – «атте манăн». Хураха кайнă çыншăн тăван кил енне çул хупăнать, хурахсен пуçĕ унăн ашшĕ вырăнне пулса тăрать, унăн сăмахĕнчен иртме те, тухма та юрамасть. «Атаман» сăмаха чăвашлатас тесен «аттеман» темелле ĕнтĕ. Хурахсене ертсе пынă хĕрарăмсене вара çак йĕркене тĕпе хурса «аннеман» теме юрать, тĕрĕкле – «анаман».

Чăваш тĕпчевçисем, поэт-писателĕсем тăван халăхран тухнă атаман-хĕрарăм – анаман йĕррисене вилсе кайса шыраççĕ. Хавхалланă анаман вара çукрах. Пулма пултарнă хĕрарăм-ертӳçе Юхма Мишши «Кăвак çĕмрен» романра кăтартнă. Емельян Пугачевăн полковникĕ, çуйар-пике Укаслу чăнах та паттăр сăнар. Анчах Укаслу – шухăшласа кăларнă çын. Пулман Емельян Пугачевăн унашкал хĕрарăм полковник.

Кӳршĕри ирçесемех вара историре чăнласах пулнă паттăр хĕрарăм ертӳçĕпе – анаманпа тивĕçлипех мухтанма пултараççĕ. Историре вăл Арзамас Алени, Темниково Алени, Алена хурах-старица ятсемпе юлнă. Паллах ĕнтĕ, вырăс хĕрарăмĕ шутланать. Çак хĕрарăм-атаман ячĕ патша вăйпучĕсем асăннинче, ют çĕр-шыв çыннисем çырса хăварнисенче пур. Унăн сăнарĕ халăх асĕнче те юлнă.

1670 çулта Степан Разин пăлхавĕ Атăлçире хыпса тухать. Авăн уйăхĕн 4-мĕшĕнче Михаил Харитонов атаман çарĕ Саранск хулине тытса илет. Пăлхавçăсем тĕрмере ларакансене ирĕке кăлараççĕ. Тĕрмене хупнисенчен пĕри – Федор Сидоров – Темниково хулине тытса илме каякан поход ертӳçи пулса тăрать.

Улатăр тăрăхĕнче пăлхава Максим Осипов атаман ертсе пыма тытăнать. Авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче вырăс, ирçемăкшă, чăваш, çармăс хресченĕсенчен тăракан Осипов атаман çарĕ Улатăр хулине штурмлать. Улатăр çывăхĕнчи Урусов кнеçĕн çыннисем, хулана пăлхавçăсем тапăннине пĕлсен «Олаторь» патĕнчен чакнă. Çак таврарах тăракан Леонтьев вăйпут та Осипов атаманпа çапăçма шикленнĕ – вăл та тарнă. Бутурлин вăйпутăн гарнизонĕ пĕрленех юлнă пăлхавçăсене хирĕç. Пăлхавçăсем хапха турулне (башнине) çунтарса яраççĕ те кармана (крепоçе) кĕреççĕ. Бутурлин вăйпут пĕр чиркĕве кĕрсе пытанать, пушар тухсан çав чиркӳрех çунса каять.

Çак хĕрӳ саманара Арзамас патĕнче Алена ятлă пĕр манашкă хăй тавра пăлхавçăсене пухма тытăнать. Ăна çамрăклах çулланнă çынна кайса кайнă панă. Упăшки вилсен Арзамас патĕнчи хĕрарăмсен Микула мăнастирĕнче манашкăна çӳç кастарнă, старица пулса тăнă. Мăнастирте Алена хут вĕреннĕ, чир-чĕре халăх меслечĕ-мелĕпе сыватма-сиплеме хăнăхнă. Кельери хĕсĕк пурнăç унăн чунĕшĕн ытла та тăвăр пулнăран Алена старица пăлхавçăсем патне кайма шут тытать. Хăй тавра малтан 200 яхăн çын пуçтарать. Кайран унăн отрядне тата 600 çын хутшăнать. Алена анаман Арзамасран Шацк енне кайма тухать, патша çарĕсем Ука (Ока) юхан шывĕ енчен çула пӳлнĕрен Мăкшă çырми çинче ларакан Темниково хулине çул тытать. Çул çинче Алена старица ушкăнне мăкшă-ирçе, вырăс, çармăс тата чăваш хресченĕсем хутшăннă. Темниковăра пăлхавçăсен 4 пинлĕ çарĕ пуçтарăнать. Алена анаман Федор Сидоров атаманăн сылтăм алли пулса тăрать. Икĕ уйăха яхăн иккĕн пĕрле ертсе пыраççĕ вĕсем пăлхава. Çав вăхăтрах манашкă аманнисене курăктымарпа сиплет, ура çине тăратать. Тепĕр вĕрӳ-сурупа та чапа тухать вăл: пуля е çĕмрен ан лектĕр тесе сăмахласа сыхчалать. Малтанах юмăç шутланнă Аленăна халăх тухатмăш вырăннех йышăнать.

Патша çарĕсене çĕнĕ çуй пуç – 70 çулхи Юрий Долгорукий кнеç ертсе пыма тытăнсан Степан Разин çарĕсенчен ăнăçу тарать. 1670 çулхи чӳк уйăхĕн 23-мĕшĕнче патша çарĕсем Улатăр хулине каялла тытса илеççĕ. Хула пăлхавçăсен аллинче 68 кун пулнă.

Арзамас патĕнче пăлхавçăсене аркатса тăксан хресченсене хăрушла хасалама тытăннă. Кунрад фон Кленк элчĕ тĕлĕнсе çапла çырать: «Çак вырăна пăхма хăрамалла, вăл тамăк алăкĕ пекех. Йĕри-тавра çакмалли юпасем, кашни çинчех çакса вĕлернĕ темиçе çын сулланса тăрать. Тепĕр тĕлте пуçĕсене каснă темĕн чухлĕ кĕлетке юн ăшĕнче йăваланса выртать. Шалчасем çине лартнă çынсем те нумай тĕлте курăнаççĕ, чылайăшĕ виличчен виçĕ талăк таран асапланать, вĕсен сассисем тăстан илтĕнеççĕ. Виçĕ уйăхра 11000 çынна асаплантарса вĕлерчĕç».

Темниковăра çирĕпленнĕ пăлхавçăсене хирĕç Долгорукий çуй пуçĕ Лихарев вăйпута ярать. Чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнче Темниковăран 15 çухрăм айккинче вырнаçнă

Веденяпино сали патĕнче пăлхавçăсен 6 пинлĕ çарне аркатса тăкаççĕ. Çар хӳттисĕр юлнă Темниково хулине Василий Волжинский полковникăн отрячĕ каять. Хулари чаплă та пуян çынсем полковника çăкăр-тăварпа тухса кĕтсе илеççĕ, хурахсене пăхăнма тивнĕрен каçару ыйтаççĕ, укçа та сĕнеççĕ. Хулари çапăçу вăйпут çурчĕ тата собор патĕнче пулса иртет. Ухă тытнă Алена соборта хӳтĕленет, çĕмренĕсем пĕтиччен 7-8 карателе вĕлерет. Хӳтĕленнин усси çуккине кура хĕçне хывса ывăтать те алтаре кĕл тума кĕрет. Чиркĕве чупса кĕнĕ карательсем иконостас умĕнче кĕл туса тăракан çамрăк хĕрарăма кураççĕ. Вăл манашка тумĕ çийĕн тимĕр çар хӳттисем тăхăннă. Çапла тыткăна лекет Алена анаман.

Ыйтса-тĕпченĕ чухне манашкă асаплантарнине сĕре чăтăмлăн тӳсни палăрать. Ыратнине туйман пекех тытать хăйне паттăр анаман. Тĕлĕнсе-аптраса ӳкнĕ палачсем çакăн хыççăн Алена чăнахах та тухатмăш иккенне ĕненсе лартаççĕ. Акă мĕн çырнă манашкă хăйĕн пирки.

«Мана Алена тесе чĕнеççĕ, Арзамасри Выездной слободара çуралса ӳснĕ, пĕр хресчене качча тухнăччĕ те, упăшкам вилсен вара старица пулма çӳç кастартăм, нумай çĕрте хурахра пулса куртăм, нумай çынна пăсрăм (тухатларăм, юмăçларăм). Кăçалхи çул (1670) Арзамасран Темниковăна килтĕм, хампа хураха кайма нумай çын пуçтартăм, вĕсемпе хураха çӳрерĕм, Темниковăра вăйпут килĕнче Федька Сидоров атаманпа тăтăм, ăна ăрăмлама-тухатлама вĕрентрĕм».

«Эпĕ, Алена старица, Темников уесĕнчи Хĕрлĕ слободари хресчен хĕрĕ, хресчен тăлăх арăмĕ, ĕмĕрте те Разин-аттене курман, илтме вара ун çинчен нумай илтнĕ тесе турă умĕнче тупа тăватăп. Пурнăç тăршшĕпе ют çынсемшĕн пилĕк аврăм, турă мана мăнастире илсе пычĕ те унта вара Степан Тимофеевич атте (Разин) пирки илтрĕм. Степан Тимофеевичпа паллашман эпĕ – пĕлнĕ тесе юри суяççĕ çынсем.

Мана таврари ялсенче, саласенче лайăх паллаççĕ: ачасене сиплетĕп, вилĕмрен хăтаратăп: Данилăн грыжине лартрăм, Еремĕн куçĕнчи урпине пĕтертĕм... Мана хресченсем шанаççĕ, Алена старица теççĕ. Эпĕ Степан Тимофеевич аттене пулăшма чĕнсен – ман хыççăн чухăнсем кайрĕç. Манăн отряда 200 çын пуçтарăнчĕ.

Эпĕ нумай çынна хураха илсе çӳренĕ тесе Долгорукий вăйпут суять. Эпир вăрламан, пуянсем туртса илнине çеç каялла тавăрнă.

Манăн отряда пынă таркăнсем Степан Разин мул-тупри пирки калатчĕç. Пĕри вара, унăн сывăх çынни, тупрана ăçта пытарнине те пĕлтернĕччĕ. Çав çынтан илтрĕм те хыснана таса вырăнта, çеттуй Иоанн Предтечи чиркĕвĕ çумĕнче пытарнине. Унта ăна турă упрать, усал вара пыраймасть. Мулне шăп ăçта чавса чикнине вара пĕлместĕп».

Раштавăн 4-мĕшĕнче Темниковăна Долгорукий кнеç пырать. Хулана çитиччен 2 çухрăмран ăна хĕрес-турăш çĕкленĕ протопоп, пачăшкăсем, хулари чинлă çынсем кĕтсе илеççĕ. Вĕсем хыçĕнче вара пĕр вĕренрен çыхнă хурах старица Аленăна, Федор Сидоров атамана, пăлхавçăсем майлă пулнă Саввăпа Пимен пупсене тата тепĕр 15 пăлхавçăна сĕтĕрсе пынă. Çуй пуçĕ тыткăна лекнисене пурне те Мăкшă çырми леш енчи Пăчăр тăвĕ çинче çакса вĕлерме, Аленăна вара, çумне хурах çырусемпе ăрăм-тухат тымарĕсене чиксе, çунтарса яма хушать.

Манашкă Аленăна патшана хирĕç хураха çӳренĕшĕн çеç мар, ереçе ернĕ тухатмăш тесе те айăпланăран пурана хупса çунтарса яма йышăннă. Çакнашкал вĕлересси сайра пулкаланă. Вĕрлĕк-шалчаран хăпартнă, çитти витнĕ пысăках мар пурана вут-шанкă, улăм, сăмала тултарса чĕртсе янă. Хасалакана пура хĕрне хăпартса тăратнă, вутта сикес умĕн унăн халăха пуç таймалла пулнă. Вăйпут паллă парсан палач айăпланă çынна шала тĕксе ывăтнă та пура çиттин алăкне хупса хунă.

Алена хурах-старица вара çунакан пура çине хумханмасăр, пăлханмасăр хăпарнă. Çунтарса янине курма пуçтарнă халăха: «Енчен те тивĕçне пурнăçлакан пултаруллă çынсем нумайрах тупăннă пулсан, вĕсем паттăррăн çапăçнă пулсан – вара Юрий кнеç каялла чакатчĕ!» – тесе калана та хĕрес хывса хăех вутта сикнĕ, çитти алăкне те шалтан хăех хупса хунă. Пĕр сас кăлармасăр çунса кĕлленнĕ паттăр хĕрарăм.

Алена чăнласах юмăç-тухатмăш тесе ĕненнĕрен çынсем вăл вутра вилмен тесе шухăшланă. Пура çунса пĕтсен унта тимĕр сăнчăр таткисене те тупайманран Алена старица таврăнать тесе сăмах та тухнă.

Алена анаман халăх асне мĕнле кĕрсе вырнаçнине унăн кăраллăхĕ çинчен хывнă хавха каласа парать. Ăнланмалла ĕнтĕ, тухатмăшпа куçакуçăн çапăçса ăна нимĕнле арçын та çĕнтерес çук – çакна пурте ĕненнĕ. Çапах та юм-çам хăвачĕпе çеç мар, ахаль те питĕ вăйлă пулнă тет Алена. Ăна тыткăна илсе çунтарса янă хыççăн Юрий Долгорукий кнеç çарĕнче Аленăн уххине карăнтарма пултаракан пĕр арçын та тупăнман имĕш. Çавăн пек пăхаттир пулнă Арзамас Алени. Чăваш халăх халапĕсенче те тупма пулать паттăртан паттăр ирçе хĕрарăмĕ çинчен каланине. Хавхаллă анаман чăваш юмахĕсенче хăйĕн ячĕпех юлнă: халапри Алена пăхаттир – шăпах вăл.

Хаккал МОККАРАН

Асамлană-юмланă пуянлăх

1942 çул. Сталинград çапăçăвĕ. Нимĕç авиацийĕ тапăнăвĕ вăхăтĕнче бомбăсем Атăлăн çӳллĕ сыранне аркатса тăкаççĕ. Ишĕлнĕ çĕр айĕнче ретлесе хунă авалхи чугун тупăсем курăнса каяççĕ. Взрыв пĕр туппин кĕпçине салатнăран унăн ăшĕнчен ылтăн сулăсем, хăлха çаккисем, çĕрĕсем, ĕнчĕ (жемчуг) эрешсем, ылтăн-кĕмĕл юхса тухать. Мул-тупрана е Атăл хурахĕсем, е Степан Разин пытарнă тесе шухăшлаççĕ совет салтакĕсем. Тупăсене йăлтах чавса кăларма хăтланакансем те тупăннă – усси тухман: шăннă тăпрана хускатайман. Çитменнине çак выраăна нимĕççем персех тăнă. Авиаци тепĕр тапăнăвĕнче чугун тупăсем каллех çĕрпе хупланнă та куçран çухалнă. Кайран вара йĕри-таврана юр хӳсе лартнă. Часах нимĕç çарне «хурана» чикес операци тытăннă.

Çак ĕç-пуçа каласа параканĕ – 1 рангри капитан Г.Бессонов. Каярахпа совет салтакĕсем мул-тупрана чавса кăларас тенĕ, анчах авалхи тупăсем çыранта хăш тĕлĕрех пулнине те тупайман. Сталинград çапăçăвĕ чухне курăнса илнĕ ылтăн-кĕмĕл чăнахах та Степан Разин пытарнă мул-тупра пулма пултарнă. Мĕншĕн тесен атаман «ытлашши» пуянлăхне кивĕ тупă кĕпçисен ăшне чиксе пытарма юратнă.

Степан Разин мул-тупри пирки сăмах-юмах питĕ нумай. Песковатовка сали патĕнче вăл ылтăн-кĕмĕл те ахах-мерчен тултарнă пысăк карапа шыв айне пытарнă тет. Шатрашан сали патĕнчи çĕр хăвăлта вара чи пысăк мул-тупра пытаннă имĕш. Атăл çинчи Наçтук тăвĕ те мул-тупраллă. Казаксен атаманĕ, пăлхавçăсен ертӳçи ылтăн тултарса путарнă карапсен-кимĕсен, мул-тупра тултарнă çĕр хăвăлĕсен шучĕ те çук темелле Атăлçире – Аçтăрхантан тытăнса Жигули тăвĕсем таран пытарса тухнă вĕсене!

Хавхасенче Степан Тимофеевичăн сăнарĕ асамлă, вăл – хăватлă тухтăмăш-юмăç. Ăна хĕç те витмест, пуля та илмест, вăл шывра та путмасть, вутра та çунмасть. Разинăн этем халĕ çеç мар, урăх юм-вăй та пулнă тет: пĕчĕк чухнех усала сутăннă имĕш вăл. Çтаппанăн аслă арăмĕ Марина та тухатмăш пулнă. Ĕмĕрсем иртеççĕ пулин те пăлхавçăхурах халĕ канăç тупаймасть тет: каçсерен е шурă урхамах утланса, е шурă пурçăн парăслă кимĕпе пытарнă мул-тупрасене Атăл тăрăх тĕрĕслесе çӳрет пулать.

Халăх Разин пирки мĕн каланине итлесен, çакнашкал утаман пачах пурăнман, ун сăнарне ытарлăн шухăшласа кăларнă тесех калас килет. Юрать документсем юлнă: Степан Разин текен çын чăнахах пур. Патшана хирĕç тăрасси малтанласа унăн асĕнче те пулман. Анчах 1663 çулта патша вăйпучĕ Долгоруков унăн аслă тетĕшне – Иван Разина вĕлерме хушать. Çакăн хыççăн Дон казакĕсен атаманĕ, патша сăмахĕнчен тухман Çтаппан тавăру çулне суйласа илет – хурах пусса çӳреме тытăнать, Атăлçи халăхĕсене пăлхава çĕклет.

Атаманăн мул-тупра питĕ нумаййи пирки халăх Çтаппан хăй чĕрĕ чухнех калаçнă. Разин та мул пытарнин çинчен перкелешкеленĕ. Мул-тупрана вĕрӳ-суру чĕлхипе тухатласа пытарнă пулать вăл. Енчен те пуянлăха тупсан, ăна илес тесен 12 пуç касмалла – мул тĕлне арçын-хĕрарăмăн 6-шар пуçне пырса хумалла пулнă имĕш!

Алексей Михайлович патша та, унăн таврашĕ те Разинăн хăрушла пысăк пуянлăх пуррине ĕненнĕ. Çтаппанпа унăн шăллĕ Фрол тыткăна лексен пытарнă мул-тупра ăçтине пĕлес тесе вĕсене шутсăр асаплантарнă – ӳт сĕвĕниччен хĕненĕ, туртаран тӳнтерле çакнă, хĕртнĕ тимĕрпе çунтарнă, хĕскĕчпе шăммисене хуçнă. Лешсем пуянлăх вăрттăнлăхне уçса паман.

Пăлхавçăсен ертӳçисене мĕнле вĕлернине курма Мускаври Хĕрлĕ лапама питĕ нумай çын пуçтарăннă (акăлчан купси Томас Хебдон çырнипе – 100 пине яхăн). Хавхана тата Конрад Штуртцфлейш текен ют çĕр-шыв çыннине ĕненсен, Çтаппан шăллĕ Фрол хăйне хавшак чунлă кăтартнă. Ал-урине каснă тетĕшĕнчен юн сирпĕтекен хапа татăкки çеç тăрса юлнине курсан: «Патша сăмахĕ те ĕçĕ!» – тесе кăшкăрнă пулать. Тетĕшĕ пытарнă мул-тупрана тупса пама пулсан пуç касан Фрол пурнăçне хăварать. Ал-урасăр, татăк пĕв çеç тăрса юлнă Çтаппан Разин вара шăллĕне: «Ан чĕн, анчăк!» – тесе хăрăлтатса илме вăй тупать. Çаксем пулнă унăн юлашки сăмахĕсем. Утаманăн пуçне касса татаççĕ те ваклана кĕлеткин пайĕсене çынсене кăтартма шалчасем çине тăрăнтарса хураççĕ, ал-урасăр, пуçсăр пĕвне вара каçпа йытăсене пăрахса параççĕ.

Разин вăрттăнлăхĕсене пĕлме Фрола Кремльти Константинпа Елена (малтан – Тимофей) турулĕнче хытă асаплантараççĕ. Алексей Михайлович вăхăтĕнче Разин мул-туприне шыранине çирĕплетекен документсем çук. Сăмах тăрăх – Фрол та пит «простоях» пулман. Тетĕшĕн еркĕнĕпе Аленăпа тата Çтаппанăн шанчăклă çыннипе Лука текен есаулпа вăрттăн çыхăнма пултарнă тет вăл, пытарнă мул-тупрана вĕсене çĕнĕрен, урăх вырăнсене чикме каланă. Патша çыннисене пытарнă пуянлăхсене 5 çула яхăн шыраттарнă пулать Фрол Разин. Ăна Мускавра 1676 çулта вĕлернĕ. Çак вăхăталлах Лука есаул та пуçне хунă. Мул-тупра вăрттăнлăхне пĕлекенни те Алена çеç тăрса юлнă. Çак хĕрарăм Лодей уйне – Август фон Роде барон патне пынă. Шведран тухнă барон хăй вăхăтĕнче Çтаппанăн тусĕ те канашлăвçи шутланнă. Алена Августа кавча кайма шут тытнă, калăм вырăнне вара пытарнă пуянлăхсен карттине чиксе килнĕ. Барон Мускав влаçĕсем сехерлеме тытăнасран хăранипе туй çинчен ĕмĕтленекен харсăр пикене тыттарса ярать, мул-тупра карттисене вара хăйне хăварать.

Фон Роде барон хĕрĕ, ашшĕнчен мул-тупра карттипе еткерленсен, упăшкипе Çтаппан мул-туприне шырама тытăнать. Аллинче карттă пулсан та – нимĕнле пуянлăх та тупаймасть. Фон Роде мăнукĕн мăнукĕ Петр Метляев çар инженерĕ те телейне тĕрĕслеме шутлать. Авалхи

карттă тăрăх хавхаллă Атăл сăмсахĕ патĕнче чăнах та çĕр айĕнчи галерейăсене тупать. Анчах мул-тупра чавса кăларса ĕлкĕреймест вăл – сарăмсăр вилет.

1875 çулта «Дон хаçатĕнче» (88№) Иловайский атаман Разин мул-туприне шырани пирки çырса кăтартнă. Ĕç-пуç 1824 çултах пулса иртнĕ.

Малтанласа документланă мул-тупра шыравĕ вара 1893 çулпа çыхăннă. Гатчин полкĕн ротмистрĕ Ящеров Разин пуянлăхне Чулхула кĕпĕрнийĕнче, Улатăр шывĕ тăрăх шырама тĕв тытнă. Археологи комиссийĕ ăна мул шырама малтанласа 2 кун, кайран вара 10 кун таранах ирĕк панă. Улатăр юхан шывĕ çинче пăлхавçăсен 12 стан пулнă тет, ротмистр шучĕпе – вĕсенчен 4-шĕнчен пĕринче Çтаппан мул пытарма пултарнă. Хура кĕркунне Ящеров ушкăнĕ Атăлçие тухса кайнă.

Шыранин усси пулман, часах хĕл те ларнă. Çав вăхăтра вырăнти полицие тĕлĕнмелле хыпар çитнĕ. Атăл хĕрринчи Печи тата Михайловка салисем патĕнче 40 метр тарăнăшĕнче чавнă хăвăл тупнă. Çынсем кĕрхи сухана тухсан пĕр лаша кайри урипе тарăн шăтăка кĕрсе ӳкнĕ. Урапа кĕмеллĕх шăтăк уçăлнă çĕр тĕпнелле. Çĕр пӳрте сывлăш кĕртмелли мăрье пулнă ахăр вăл. Аяла иккĕн анса пăхма шут тытаççĕ. Сехре хăпнăран пĕр çынни анкăминкĕленсех каять, ăна каялла туртса кăларсан та карта лараймасть – çĕрле вилсе каять. Теприн те, псалом вулаканăн, хăранăран юлашки сывлăшĕ чутах тухса кайман. Çĕр айĕнче мĕн курма ĕлкĕрнине тăна кĕрсе çитсен каласа панă вăл: çĕр пӳрт алăкĕсене юманран тунă, вĕсене тимĕр сăлăпсем ярса тимĕр çăрасемпе питĕрнĕ.

Отставкăна тухнă Ящеров ротмистр 1904 çулта каллех Разин мул-туприне шырама тытăнать. Вилнĕ асламăшĕн хучĕсене пăхкаланă чух вăл пытарнă мул ăçтине калакан çыру тупнă. Çырура кăтартнă тĕле тупайнă Ящеров. Пуянлăх пытарнине кăтартакан паллăсене те – касса çырнă чула, ылтăн тултарнă кимме путарнă пĕве йĕррисене, çĕр хăвăлĕсене те тупнă пулать вăл. Ăнăçу каллех тарать ротмистртан: вырăс-яппун вăрçи тытăнать. Ротмистр çара чĕнеççĕ, вăл вăрçăра – Маньчжурире пуçне хурать.

Мул ăçтине калакан çыру Дон çарĕн есаулĕн аллине лекет. 1910 çулта 63-ри есаул çак документа Питĕрти хаçатсенче те пичетлет. Чылай çын мул шыраса пăхнă тет çакăн хыççăн – никам та нимĕн те тупайман.

1914 çулта тепĕр пăтăрмах пулса иртет. Царицынри (унччен – Сталинград, халĕ – Волгоград) Çеттуй Троица чиркĕвĕнчен инçе те мар çĕр ишĕлсе аннă. Уçăлнă шăтăкра, 4 метр тарăнăшĕнче тупăксем, шăмшаксем курăнса кайнă. (Тепĕр сăмаха ĕненсен вара мул та тупнă пулать: тупăк хупписене уçса пăхнă та – унта вара туллиех перс ылтăнĕ.) Çеттуй Троица чиркĕвĕнчен Атăл енне каякан çĕр айĕнчи çул та уçăлнă. Ăна Çтаппан утаман вăхăтĕнчех хута янă пулнă. Çĕр айĕнчи вăрттăн çулпа Атăл хĕррине те тухса пăхма шухăшлаççĕ çынсем, анчах çĕр ишĕлсех тăнăран хăтланса пăхас текен харсăрсем тупăнмаççĕ.

Тепĕр сăмах тăрăх – 1942 çулта теменле «М.К.» аллине нимĕç офицерĕн хучĕсем лекнĕ. Ылтăн Урта вăхăтĕнчи мул-тупра çинчен калакан çырусемпе пĕрле Дон çинчи утравра пытарнă Разин пуянлăхĕ пирки те хут пулнă тет унта.

Степан Разинăн Чăваш Ен тăрăхĕнче те мул пур. Ăна тĕплĕн, хăрушла вĕрӳ-суруласа пытарнă, «Пиллени» ятпа паллă вăл. «Эпĕ, Степан Тимофеевич, Разин ывăлĕ, Улатăр хулинчен Сăр шывĕпе тăвалла пытăм та Транслейка çырми патне çитрĕм те Мăкшăран Сăр урлă ăçта каçмалла тесе ыйтрăм та пĕтĕм çарпа каçрăм. Сăртсем патне çаврăнса çитсен сылтăм енче çăл куç тупрăм, çакăнта эпир çулталăк çурă пурăнтăмăр, çапах ку вырăн пире курăнмарĕ. Вара эпир хур-хăмăрçăна тупрăмăр, килĕшекен вырăн ăçтине каларĕ вăл, эпир унта 4 кун кайрăмăр та ту патне çитрĕмĕр – вара каллех сăрт, çав ту çинче кăнтăрла çăл куç уçăлать, сăрт тăрринче икĕ пӳрт кăнтăралла пăхаççĕ... икĕ шырлан хушшинчи сăмсахра виçĕ улмуççи лартнă, сăрт варринче – лумсем, савăлсем, кĕреçесем тата пăхăр хăма, сăрт тăрринче – тимĕр калпак. Çавăнтах тунката – юмана пăраласа шăтарнă та хура юманпа çапса питĕрнĕ, тата çакăнтах пăшалсем те бомбăсем хунă, çакăнтах вара шала кĕмелли-тухмаллине алтнă та тунă, юман хăмапа çапнă, çавăнта ĕнтĕ пирĕн хыснана хунă, 40 пăхăр савăт, манăн вара – Улатăрти çăрасен хуçин Бабушкин купсан хĕрĕх пин, унăн Иванĕн икĕ арча кĕпе-тумтир, виççĕмĕш арчара – ĕнчĕ эрешсем тата хаклă япаласем. Суйласа илнĕ ĕнчĕ тăватă пăт тата çичĕ пăшал, манăн пăшал кĕтесре тăрать, ăна авăрланă та кĕпçине пăкăланă – курăкпа пăкăланă. Варринче тĕрлĕ бриллиантпа илемлетнĕ Турамăш турăшĕ тăрать.

Çак вырăна кам та пулин тупсан пĕр хушă çĕр чĕтрет, тункатаран турта вăрăмĕшĕнче (алăк); тупаканнин вара хĕрĕх пинлĕ хыснана шурă ут утланса салатса памалла, салатса пĕтерсен – манăн туркка пăшалĕнчен пемелле те: «Акă сана, Разин ывăлĕ Степан Тимофеевич, ĕмĕр-ĕмĕр асăм-тăвăм!» – тесе каламалла. Урхамахăнне вара пуçне касса татмалла... Унччен вара виçĕ кĕлĕ вуламалла – Турамăшăнне, Михаил архангелăнне тата Микула ырасамçăнне, вара виçĕ хут çĕр чĕтрет».

Çакнашкал – пит ăнланмаллах та мар – пил хăварнă тет Çтаппан Разин. Асăннă мул-тупра вырăнĕ: Улатăртан Сăр тăрăх 30 çухрăм тăвалла хăпарсан Çтаппан Мăкшăпа тĕл пулнă, юхан шывăн сылтăм çыраннĕнчи сăртра стан лартнă. Кайран хурт-хăмăрçă кăтартнипе Сăр тăрăх тата 4 кун тăвалла хăпарнă. Кам миллионер пулас тет – кăçалах пуянлăх шырама пуçтарăнăр: Çтаппан Разинăн пĕр мулĕ Пенза патĕнче!

Ускатум КУНЦУЙ

Театр хавхалантарать

Ĕлĕкрех кашни шкулта тенĕ пекех театр е драма çаври (кружокĕ) пурччĕ. Халĕ шкулта лару-тăру урăхларах. Хор тата театр кружокĕсен самани иртсе кайрĕ пулмалла. Çавăн пек туйăнать паян. Ыран вара? Шупашкар районĕнчи Кăшавăшри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта ӳнерпе илемлĕх предмечĕсене тарăнрах вĕрентнине малашлăха кĕпер хывни тесех хакламалла. Кунта театр студийĕ те пур. Пуçарса яраканĕ – Геннадий Леонидович Васильев, шкул директорĕ. Студент çулĕсенче «Вутчуль» театр студийĕн хастарĕ пулнăскер, шкула ĕçлеме пырсан та сцена пирки манман вăл. Мăшăрĕ те, Вера Александровна, театр тĕнчине чунпа парăннă. Геннадий Леонидовичпа Вера Александровна иккĕшĕ пĕрле пьесăсем те çыраççĕ.

Шкулти театр çаврин пĕлтерĕшĕ çав тери пысăк. Кашни спектакль – манăçми уяв. Уйрăмах – кĕçĕн класри ачасемшĕн. Вĕсем çамрăк артистсене куç илми сăнаççĕ, юмах тĕнчин асамĕ илĕртет те чĕнет вĕсене. Кружокăн чи пысăк тĕллевĕ – сăмах вăййĕпе, сцена витĕмĕпе культура кĕтретне ăнтăлтарни. Çамрăк артистсен чĕлхе туйăмĕ çивĕчленет, вĕсем сăнарлăн каласма хăнăхаççĕ, тавра курăм та аталанать, илемлĕ литература та ытларах илĕртме тытăнать. Театр çаврине çӳрекен тĕрлĕ çулти ачасене сцена тантăшлатать те туслаштарать. Ачасем хăйсене çынсем умĕнче хăюллăн тытма вĕренеççĕ, кирлĕ мар çĕртенех вăтанса çухалса каяссинчен хăтăлаççĕ.

Кăшавăшри театр студине халĕ Любовь Пантелеймоновна Иванова ертсе пырать. Вăл – Геннадий Леонидовичăн вĕренекенĕ. Асамлăх тĕнчине 9-мĕш классем ытларах иленнĕ. Труппăра чăн-чăн артист пулас кăмăллă хĕр те пур: Мария Никифорова. Кăçал Шупашкарти культура училищине (техникумне) вĕренме кĕрес ĕмĕтлĕ вăл. Училищери пултарулăх конкурсĕ витĕр ăнăçлă тухнă Мария, студентсемпе те паллашнă. Куç пек кĕтеççĕ ăна Шупашкарта.

Кăшлавăшри театр студине çӳрекенсем хушшинче арçын ачасем те пурри чунтан савăнтарчĕ. Юлашки вăхăтра каччăсем пурнăçра сӳрĕкленсе пыни сисĕнет. Педагог пулас текен йĕкĕте халь курнă-и эсир? Университетсенчи филологи уйрăмĕсенче арçын ачасем çукпа пĕрех. Çавăнпа гуманитари ăслайĕсем енне туртăнакан яш-кĕрĕме хавхалантарма хăш-пĕр çĕр-шывра ятарлă стипендисем йĕркелеççĕ. Гуманитари ăслăлăхĕсемсĕр, культура аталанăвĕсĕр нимĕнле çĕр-шыв та мала каяймасть: çул хупă. Шел, тăван республикăра та, Раççейре те çакна ăнланни çук. Экономика та – хальхи этемĕн ăс-тăнне çавăрнă «панацея» – аталанаймасть вĕсемсĕр.

Театр студийĕн репетицийĕнче пулса курма тӳр килчĕ мана. «Эпир Сирĕн умăрта япăхрах вылярăмăр. Репетици ялан çапла иртет тесе ан шутлăр. Халăх умне тухсан вара сцена çухалать те урăх пурнăç тытăнать. Хумханни нихăçан та иртсе каймасть пулин те вăл урăх шая куçать – чуна парса выляма хистекен туйăм пулса тăрать», – пĕр-пĕрне пӳлсех хавхалануллăн калаçрĕç çамрăк артистсем.

Кăшлавăш шкулĕнче чăваш чĕлхипе литература урокĕсене те йыхравларĕç мана. Евгений Александрович Майков вĕрентекене ачасем кăмăллани, унпа пĕр чĕлхе тупни лайăх сисĕнчĕ. Ахальтен мар республика шайĕнчи конкурссенче унăн вĕренекенĕсем час-часах малти вырăнсене тухаççĕ. Кăçал та «Туслăх хĕлхемĕ» фестивальте Дарья Федорова 1-мĕш вырăна тивĕçсе «Орленок» лагере кайма путевка çĕнсе илчĕ.

Ача-пăча хаçат-журналĕнче ĕçленĕ вăхăтсем куç умне тухса тăчĕç ачалăх асамне упракан коридорсемпе çӳренĕ май. Шкулсенчи драма кружокĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă май çамрăк артистсене халлласа сăвă та çырнăччĕ эпĕ тахçан.

Ватă салтак

Тăван уяв – çĕр-шыв уявĕ –
Чыслатпăр Çĕнтерӳ кунне.
Кашни сăн-пит шевле туяннă,
Хĕвел кĕрет çынсен чунне.

Ĕç тупăннă ав ват салтакăн.
Пралукпала тем тĕрмешет.
Пĕрре çакать, унтан салтать те
Каллех çыхать вăл – кĕрмешет.

Тытать пек ветеран экзамен,
Шăлать тарланă пит-куçне.
Клуба çакса пыма хушса-мĕн
Паян пур орден-медальне.

Вĕсем çурри ытла çухалнă,
Пуррин те – çĕмрĕк çаккисем.
Тирпейсĕр-шим çак шур сухаллă
Лара-тăра пĕлмен этем?

Мухтав пирки вăл шутламанччĕ,
Чыс тăвасса илмен ăша.
Нимскер те паттăрлăх туманçăн
Хăйне туятчĕ, апăрша.

«Кĕрешесси çĕр-шывшăн –
тивĕç», –
Тесе шутланă – çав кăна.
(Мĕн каласси, çунтарнă сивĕ,
«Пас тытнă» вĕрире ăна.)

Вăл орден-медальне çакманччĕ
Паян куна та çитиччен.
Вĕсем çак таранччен кайманччĕ
Кĕрлевлĕ клуб сцени çинчен.

Мĕн чухлĕ вĕсемпе выляна
Шкул ачисем спектакльте.
Кивелнĕ йăлт, мĕнле кулянмăн?
Çук, кулянмасть-мĕн асатте.

Çĕн ăрусем ăмсаннă мар-и
Совет салтакĕн вăй-халне!?
Хăрмарĕ паттăрлăх тымарĕ,
Çак уншăн – чи паха парне.

...Леш «артистсем» илеççĕ халĕ
Вĕр-çĕнĕ орден-медальсем –
Çĕре ӳкмен ват çын халалĕ –
Çĕр-шывăн шанчăкĕ вĕсем.

Василий КОШКИН-КЕРВЕН

Хĕрарăм шухăшлавĕ

(анекдот)

Маршруткăна кĕрсе вырнаçрăм. Манăн умра пĕр чиперкке ларать. Билет укçине çак майрушкăран пама чиперука «эсĕ» е «эсир» тесе чĕнмелле-ши тесе шухăшласа илтĕм. Аптракан йышши мар вĕт, çиччас тавçăратпăр.



Пур тĕнчере логика, ахаль шухăшласа кăларман вăл сăмаха.

Пирĕн маршрутка – экспресс. Умра ларакан майрушка чарăнура анса юлмарĕ – апла вăл пирĕн районах каять. Хамăр патри чиперккесене пурне те паллатăп – ку хĕр пирĕн районта пурăнмасть. Апла вăл хăнана каять. Унăн аллинче – пакет, унта хĕрлĕ эрех кĕленчи те курăнать. Пĕр-пĕр арçынпа тĕл пулма васкать ĕнтĕ ку чиперкке. Хĕрĕ хăй питĕ илемлĕ, апла пули-пулми арçынпа тĕл пулманни паллă. Пакетĕнчи эрехĕ те хаклă, Францире тунăскер. Пĕтĕмлетӳ пĕрре: хитре арçын патне хăнана каять пике – иккĕленӳ çук.

Эпĕ пурăнакан районта хитре арçын нумай мар – пурĕ те иккĕ çеç: манăн упăшка – Сергей тата манăн еркĕн – Саша. Çак самантра Саша патне эпĕ хам кайма тухнă, çавăнпа ку майрушка манăн савни патне çул тытмасть. Апла чиперкке манăн упăшкапа тĕл пулма васкать – иккĕленӳ валли вырăн çук..

Манăн упăшкан вара икĕ еркĕн – Света тата Катя. Света хальхи вăхăтра урăх хулара – ăна командировкăна янă. Çавăнпа çак пике Света пулма пултараймасть – ниепле те. Чиперкке камне пĕлтĕмĕр те – мĕн иккĕленесси: хурçă логика!

– Катя, водителе çак укçана пар-ха, – тетĕп маршруткăра хирĕç ларакан пикене.

– Эсир мана ăçтан пĕлетĕр? – шалт тĕлĕнсе кайрĕ чиперкке.

Телейлĕ сыннăн ăраскалĕ синкерлĕ тухмасть

МĔН ВĂЛ «ЖИГУЛИ» ВЫЛЯСА ИЛЕССИ? АПЧХИ ТУНĂ ПЕК КĂНА!

Ăнман сынсем пирки тем те пĕлетпĕр. Юнашарах вара ăннă сынсем те пурри пирки пит шухăшласах та каймастпăр. Вĕсене – мĕн кала та! – яланах ăнать, телей шыраса çӳрес çук унашкал сынсен: телей хăй вĕсене çĕрĕнкунĕн шырать. Çакăн пек ялан телейлĕ юлташсенчен пĕри тахçан – 80-мĕшсенче – хуралта ĕçленĕ. Пĕрре çапла çĕрлехи сменăна тухсан тем паллă тăваççĕ вĕсем. Çăра чейпе помидор сĕткенĕ çеç ĕçмеççĕ хуралçăсем, «çур литр калибрлă артиллерие» те сĕтел çине лартаççĕ. Телейпе туслă юлташ ӳсĕр пуçпа тăван завод шанса панă хĕç-пăшала – «9 миллиметр калибрлă Макаров пистолетне» таçта чиксе хурать (чухлăрăр пулĕ: эрех-сăрана телей те юратмасть).Тем пек шырасан та смена улшăннă чух пистолета тупса параймасть. «Макарова» çĕтернине Мускав пĕлсен çакă нимĕн те мар СССР масштабĕллĕ ЧП пулма пултарнăран шанчăкран тухнă юлташа смена вĕçленсен пилĕк минутранах ĕçрен хăтараççĕ.

Ан шухăшлăр çак сынна ăнма пăрахнă тесе, туссем! Телей сукмакĕсем ăçталла тăсăлнине никам та пĕлмест.

Тар тăка-тăка тулли курка çĕклесе ĕçленĕ вырăнтан тухать те хайхи – тусĕсене тĕл пулать. Ăна ĕçрен хăтарнине пĕлсен: «Кăна сăра ĕçсе паллă тумалла!» – текен шухăш çуралать лешсен (вăл вăхăтра лавккасенче ирпе шур эрех сутман). Сăра илнĕ май экс-хуралçă кассăра «Спортлото» виçĕ билетне те туянать. Уçать те пĕр билетне хăй мĕн курнине ĕненмест: «Автомобиль «ВАЗ 2101» тесе çырнă унта! Тепĕр икĕ билетне уçса та пăхмасть вăл, «Спортлото» хучĕсене сăра юратакан юлташĕсене тыттарать те – часрах килне чупать.

9-МĔШ ХУТРАН СИКМЕ ПАРАШЮТ КИРЛĔ МАР

Çак юлташах пĕрре хăнана каять. Тусĕ ăна хапăл туса кĕтсе илет. «Шыв вĕретме лартрăм, эсĕ чей е кофе ĕçетĕн?» – ыйтать вăл хăнаран. «Малтан пĕрер 100 грамм хаяррине ĕçсе пăхар-ха – вара паллă пулать: чей кирлĕ-и пире е кофе юрататпăр эпир», – хуравлать тусĕ патне шăп ĕнтĕ чей панккаса ларма килмен юлташ.

Сыпкаласан-çырткаласан, кĕске тăхтав тума вăхăт çитсен, кăмăл тулнине татах та хăпартас тесен мĕн тумалла? Тĕрĕс, пирус паклаттарса ямалла. 9-мĕш хутра пурăнакан тусĕпе пирус туртма балкон çине тухать телейпе туслă юлташ. Кăштах пуçа кайнăран кăмăлсем ытла та сарлакаран балкон карлăкĕ çине хăпарса ларать хайхи. Пирус мăкăрлантарнă май хавхаланса тем каласа панă чухне сисмест те хĕрĕнкĕскер – аялалла сирпĕнет те анать (каллех чухлăрăр пулĕ: эрех-сăрана телей чăтма пултараймасть).

Телейлĕ сынна синкерлĕ шăпа хăратмасть – çут çанталăкăн хытă саккунĕ ку. Пирĕн юлташ 9-мĕш хутран ӳкнĕ чух темле майпа 6-мĕш хутри балкон çине шаплатса кĕрсе выртма пултарать. «Васкавлă пулăшу» чĕнсе илсе пульницăна ăсатаççĕ ялан ăнакан юлташа. Темиçе аяк пĕрчи çеç хуçăлнă унăн. Ăннă япала малалла та ăнать çав ĕнтĕ.

9-мĕш хутран ӳксе чĕп-чĕрĕ юлни хăй ĕнтĕ туптулли телей, анчах ку çеç-и-ха? Çунатсăр, анчах кирлĕ чухлĕ хĕрĕнкĕ Икара пульницăна илсе çитереççĕ те тĕрĕсленĕ чухне çак юлташ туберкулез чирĕпе чирленине пĕлеççĕ. Чирне вăхăтра – пуçламăш тапхăрĕнчех – палăртнăран сыватаççĕ ăннă çынна. Енчен те телейлĕ этем балкон çинчен перса анса пульницăна лекмен пулсан туберкулез пирки пĕлместчĕç те тухтăрсем. Лешĕн хăйĕн те чир шухăш асра та пулмастчĕ. Туберкулез шала каясси куç кĕретчĕ, кайран сыватасси вара ыйтăвлăччĕ. Çавăнпа управçă-пирĕшти хăйне шанса панă çынна вăхăтра сыватас тесе татăклă мерăсем йышăннă: юлташа 9-мĕш хутран пăрахнă.

Клава ПЫРКИНА

Кăвак кĕл чечек

1.

Вăрманта мĕнле-ске уçă. Нимĕнле шăрăх та хăратмасть. Йывăçсем çуллĕ те, тӳпе те курăнмасть. Çырласем тата, тин çеç пиçнĕскерсем, сĕткенлĕ те пылак. Хĕп-хĕрлĕ пуçсем вăрмана шалалла та шалалла чĕнеççĕ.

Çавна пула ĕнтĕ эпĕ вăрмана палламан çĕртерех кĕрсе кайрăм. Аннене куç умĕнчен çухатрăм. Хам та пĕлместĕп – ăçта лекрĕм? Чăтлăх тытăнчĕ. Анчах сехĕрленсе ӳкмерĕм. Кăмăл вăйне пуçтарса хама лăпланма хушрăм. Ним хăрушши те çук. Сывлăш çавăрса ятăм та каялла тухма тытăнтăм. Часах темле сукмак патне çитрĕм. «Акă манăн çăлăнăç!» – тесе çав сукмакпа хăюллăнах утрăм. Çак тĕлĕнмелле çул вăрман ăшне тата шалалла илсе кайрĕ. «Пур пĕр ăçта та пулин тухатăп», – тесе çеç пыратăп хам. Сукмак пысăках мар темĕнле тĕмĕ патне çитерчĕ.

Эпĕ лайăх сăнаса пăхрăм та тĕлĕннипе хамăн куçа ĕненмерĕм. Пулма пултарайманнине куртăм: манăн умра чăн-чăн кăвак кĕл чечек тĕмми! Епле хитре вăл! Сывлăм типсех çитеймен те чĕр кĕмĕл тумламсем ялкăш! çуталса илеççĕ. Нивушлĕ пирĕн вăрманта та кĕл чечек ӳсет? Мĕнле шăнса вилмен вăл хĕлле? Чăнах та – çанталăк улшăнчĕ çав. Мĕнле илем чечекленет хура вăрман варринче!

Савăнни-хавхаланнипе чĕре чутах çурăлса каятчĕ. Кĕл чечек патне пĕшкĕнтĕм те тутлă техĕме пĕтĕм кăкăрпа сывласа илтĕм. Юлташсене кăтартма тесе пĕр чечекне татма алла тăсрăм кăна – чикĕл-макăль йăваланса кайрăм. Чечексен пылак шăршийĕ ыйăха путарчĕ...

2.

Пуç янранипе тăна кĕтĕм – тăрса лартăм. Пуçăма алăсемпе йăваласа сăтăрсан янрани иртсе кайрĕ. Ерипен ура çине тăтăм. Пуçа çӳлелле çĕклерĕм те – каялла кайса лартăм: пуç çаврăннипе ура вăйĕ пĕтнĕрен мар, тӳпе сарă пулнăран. Хĕвел вара хĕп-хĕрлĕ! Йĕри-тавра сăнаса çаврăнтăм та капланнă сурчăка хăранипе аран çăтса ятăм. Йывăçсемпе чечексем тымарĕпе çӳлелле, тăррипе аялалла ӳсеççĕ. Хурт-кăпшанкисем те кутăн май вĕçеççĕ. Тĕлĕк куратăп пуль тесе çари çухăрса ятăм. Пулăшмарĕ. Пуç хĕрлĕ тĕнче мĕнле пулнă – çавăн пекех. Куççуль шăпăршăпăр юхса анчĕ. Лекрĕм тĕк лекрĕм – ăçта эпĕ? Мĕн тумаллине те пĕлместĕп. Йĕрсе ларнă чух алла темĕскер чиксе илчĕ – кăвак роза иккен. Татса ĕлкĕрнĕ-ха эпĕ ăна. Чечеке кĕсйене чиксе хутăм та тĕлĕнтермĕш вăрмантан тухмалли сукмак шырама пикентĕм. Унталла утатăп, кунталла...

Пушшех çухалса кайнă пек туйăнчĕ. Тарăхнăран, ним тума аптранăран пĕр йывăççине пур вăйран тапрăм. Унтан тем печĕ те анчĕ. Пăхрăм та – çын иккен! Ман пекех капюшонлă куртка тăхăннă. Пулăшас тесе чупса пытăм та... Çынни вара ӳснĕçем ӳссе пырать. Хăранипе йăпăрт çаврăнтăм та тарма пикентĕм, анчах вăл мана куртка капюшонĕнчен ярса тытрĕ. Çухалса каймарăм: ялт çеç ун енне çаврăнтăм та кинори самурайсем пек хăлаçланма пуçларăм. Çӳлтен персе аннă çын аллине вĕçертрĕ те чеен кулса илчĕ. Мухтаса тенĕн ал çупрĕ те куртким капюшонне хыврĕ. Тăнă çĕртех çĕре тӳплетсе антăм. Умра манран та çӳллĕрех сарă кăткă тăра парать.

3.

Такамсем питĕ тавлашса калаçнипе вăранса кайрăм хальхинче. Куçа уçрăм. Сылтăм енчен чĕвĕл-чĕвĕл туни илтĕнет. Унталла пуçа пăртăм. Кăткă-улăпсем лараççĕ! Сиксе тăтăм та кăшкăра-кăшкăра пӳлĕм йĕри-тавра чупма пуçларăм. Асăрхамасăр тем çине пырса тăрăнтăм та каллех тӳнсе кайрăм. Умрах йăлтăр çăлтăрсем чупатчĕç, куçа хупсан вĕсем çухалчĕç.

Куçа кун çути таврăнсан нимĕнле кăткăсене те курмарăм. Такам, тăна кĕрсе йăшăлтатма тытăннипе пулмалла, çурăмран тĕкрĕ. Шартах сиксе ун енне çаврăнтăм.

– Вăрантăн ĕнтĕ. Ларса апат çисем, – терĕ вăл сĕтел çине кăтартса. – Икĕ кун çывратăн. Вăраннă та пĕлместĕн.

Эпĕ куçа чарса пăрахнăран йăл кулса лăплантарчĕ те каласăва малалла тăсрĕ:

– Мана Якам тесе чĕнеççĕ. Ним тĕлĕнмелли те çук: сирĕн чĕлхене эпир лайăх пĕлетпĕр. Пирĕнтен хăрама кирлĕ мар. Халĕ апат ларса çисем, тархасшăн.

Хăраман пек кăтартса апат çиме лартăм, шалтан вара сив чир ернĕ евĕрех чĕтреттерет. Сĕннĕ яшка çине пăхрăм та – унта такамăн куçĕсем ишсе çӳренине асăрхарăм. Чашăка аяккалла тĕртсе хутăм.

– Тавтапуç, çиесех килмест, – терĕм Якама.

– Ан суй. Йĕрĕнсе-тиркешсе ан лар. Ку чечек яшкине ятарласа сан валли пĕçертĕм. Çиместĕп тесе кутăнлашать тата!

– Мĕн чечек яшки пултăр ку? Куçсем ишсе çӳреççĕ унта!

– Куçсем мар вĕсем. Ку чечеке эпир чӳкĕç тетпĕр. Вăл питĕ усăллă. Ăна çисен тепĕр икĕ кун çимесен те пултаратăн.

Чĕрене хытарсах пĕр кашăк сыпрăм. Тути лимонăнни пек. Чышкăпа юнамаççĕ пулсан та – хăратăп: чашăка пĕчĕккĕн пушатрăм. Йĕрĕннине те кăтартмарăм – патаклĕç тата. Çавăнпа кӳрентерес мар терĕм. Якам хĕвел пек çиçсе кайрĕ. Тав сăмахĕ каларăм та йăл култăм ăна хирĕç.

Сарă кăткă мана урама илсе тухрĕ. Тĕлĕнмелли нумай куртăм унта. Вĕсен пӳрчĕсем тепĕр май лараççĕ. Пур выльăх-чĕрлĕхĕ те вĕçме пĕлет. Шывĕ вĕсен сĕт тĕслĕ. Пахчисенче калаçакан чечексем, çимĕçсем ӳсеççĕ. Вĕсемпе калаçса пăхма хăтлантăм, анчах вĕсемшĕн çичĕ ют пулнăран çимĕçсем çăвар уçмарĕç.

Сасартăк шăв-шав çĕкленчĕ. Пире тапăнаççĕ иккен. Якам мана йăтрĕ те тĕпсакайне анчĕ – пытантăмăр. Пилĕк кун унта лартăмăр. Ялта сас-чӳ шăплансан тин тухрăмăр.

Тапăннисем каялла кайнă пулмалла. Хăрушлăх çук пек. Урама тухса пăхрăмăр. Унта сарă кăткă виллисем çеç выртаççĕ. Якам пĕр кăткă умĕнче чĕркуçленсе ларчĕ те ӳлесе макăрса ячĕ. Хуйхă пырса çапнă тусăма çурăмĕнчен ачашларăм.

– Якам, – шăппăн чĕнтĕм ăна.

– Ман юратнă пиччем, пĕртен пĕр пиччем куçне уçмасть, – йĕре-йĕре каларĕ сарă кăткă тетĕшĕн кĕлеткине ыталаса. Эпĕ те юнашар чĕркуçленсе лартăм, Якама ыталарăм.

– Ăнланатăп санăн хуйхуна, санăн хальхи туйăмна, – сасартăк пуçларăм эпĕ. – Чĕрере темĕскер татăлать пек, нимĕн те тума пултарайманшăн тарăху çуралать. Каярахпа кăкăра пушлăх тулать. Манăн та пĕртен пĕр пиччем вăрçăра вилнĕ теççĕ. Унăн ӳт-пĕвне те тупайман. Таврăнатăп тесе тупа турĕ хăй, сăмахне тытаймарĕ. Вăрçă пĕтни те икĕ çул иртрĕ. Ни вăл, ни унăн ӳчĕ çук. Ăçта вăл – пĕлместпĕр. Çапах пиччем яланах манăн чĕрере. Ăна нихăçан та манмастăп. Чĕрере, аса-илӳсенче чĕрĕ вăл, – алла чĕре тĕлне тытрăм эпĕ. Вара шăппăн йĕрсе ятăм.

4.

– Пысăк Ăнтăк патшалăхра мирлĕ те телейлĕ пурнăçпа сарă та хĕрлĕ кăткăсем пурăннă. Сарă кăткăсен çĕр-шывĕ Ăрас ятлă пулнă, хĕрлисен – Ĕлрĕх. Анчах вĕсем элтăрăхĕсене нихăçан та уйăрман, икĕ пая пайламан. Пурте пĕрле ĕçленĕ те, савăннă та. Кăткă патшисем те – Ăраспа Ĕлрĕх – пĕр керментех пурăннă. Калаçса-килĕшсе саккунсем пĕрле кăларнă. Вĕсен пĕрер хĕр ӳснĕ. Ăрас патшан хĕрне Вирĕмпи тесе чĕннĕ, Ĕлрĕх патшанне – Тĕктĕмпи. Хĕрсем мĕн пĕчĕкрен пĕрле ӳснĕ, питĕ туслă пулнă. Çакăн пек мирлĕ те телейлĕ вăхăтра ӳснĕ Якам хăй те.

Кăткă патшисем çĕре кĕрсен вĕсен вырăнне хĕрĕсем ларнă.

Пĕррехинче вара Тĕктĕмпи кĕвĕçӳ чирĕпе чирлесе ӳкет. Вирĕмпине кĕвĕçме пуçлать: унăн чиперлĕхне, пултарулăхне ăмсанать. Тытать те ăнман Тĕктĕмпи сарă кăткăсен патша майрине тухатлать – çывăрттарса ярать те керменре пытарать. Çавăн хыççăн Тĕктĕмпи Ăрас çĕршывне пĕтерме шут тытать. Вăрçă пуçласа ярать. Хĕрлĕ кăткăсем ялсене тапăнма тытăнаççĕ. Тĕктĕмпи Ăрас элтăрăхĕнче те хуçаланать: «Ăнтăк патшалăхĕн хуçи эпĕ!» – тет.

Çăлтăрсен чĕлхине пĕлекенсем каланă тăрăх – пирĕн Ăрас çĕр-шывне Вирĕмпи çеç хăтарма пултарать. Ăна тутлă ыйхăран вăратма кăвак кĕл чечек кирлĕ. Унăн шăрши ыйхăна путарма та, вăратма та пултарать. Анчах çав çеçкене тупакан пур-ши çут тĕнчере? Кăвак роза икĕ пин çулта пĕрре чечеке ларать. Вăл ăçта ӳснине те никам та пĕлмест. Пĕтрĕ иккен пирĕн мухтавлă Ăрас эл-тăрăхĕ, – ĕсĕклерĕ сарă кăткă.

– Якам, çак çеçке çинчен калатăн-и эс? – ыйтрăм кĕсьерен кăвак кĕл чечеке кăларса.

Халăхĕпех ĕмĕтленнĕ чечеке курсан Якам чĕлхесĕр пулса тăчĕ, пуçне çеç сĕлтейрĕ. Халь çеç хуйха путнăскер савăнăçпа тулчĕ.

Вăхăта ирттерсе тăмасăр çула тухрăмăр иксĕмĕр. Патша керменĕ патне çитсен Якам тимлĕрех пулма хушрĕ. Унта хăрушлăх кăна мар, кĕтмен япаласем те тĕл пулма пултараççĕ иккен.

Якам алăка уçсан эпир шала – тĕттĕме кĕрсе тăтăмăр. Пирĕн хыççăн алăк хăйне хăй хупăнчĕ те пӳлĕмре ялт çуталса кайрĕ. Йĕри-тавра 100 яхăн та пулĕ алăк. Вирĕмпи патне хăшĕнчен кĕмеллине пĕлместпĕр. Пĕрне уçрăмăр – пушă, теприне – каллех. Вара Якама аллинчен тытрăм та пĕр иккĕленмесĕр каларăм:

– Вирĕмпи выртакан алăка питĕрсе илнĕ. Ыттисене вара аташтарма, вăхăта ирттерме лартнă. Çăра çакăнса тăракан алăк тупмалла пирĕн.

Якам килĕшрĕ. Часах эпир питĕрнĕ алăка тупрăмăр. Анчах çăрана уçма çăраççи кирлĕ. Ăна ăçтан тупмалла – пĕлместпĕр. Тупсăмне тупма Тĕктĕмпи пулăшрĕ.

– Çав алăка эсир нихăçан та уçаймастăр, мĕншĕн тесен çăраççи манра, – илтĕнчĕ кăткă патша майри сасси. – Сирĕн çăлăнăç çук! – тухса тăчĕ вăл пирĕн ума. – Тытăр вĕсене! – кăшкăрчĕ вăл хăйĕн тарçисене. Лешсем хупăрласа та илчĕç пире.

Хĕрлĕ кăткăсем тапăнсан мана çăлас тесе çеç тĕпсакайне пытаннă иккен Якам. Ун пек вăйлă çапăçакан Ăнтăк патшалăхĕнче тек никам та çук. Кăткă тус хĕçне туртса кăларчĕ те хăш самантра тарçăсене çĕнтерчĕ.

Эп Тĕктĕмпи патне чупса пытăм:

– Çăраççине панă пултăр! Часрах! – тесе хушрăм.

Вăл усаллăн ахăлтатса илчĕ те йĕкĕлтесе çăраççине силлерĕ: «Тыт та ил!» – терĕ те, уçсине мăйĕнчен çакрĕ те – тара пачĕ.

Эпĕ – ун хыççăн. Керментен тухсан Тĕктĕмпи кайăк пек çунатне сарчĕ те вĕçсе хăпарчĕ. Çырла татма кайнă чух юп-турат чикнĕччĕ, рогаткăна кĕсьерен туртса кăлартăм та çавра чул хурса тĕллесе петĕм. Çавра чул Тĕктĕмпие лекрĕ, патша майри татăлнă çулçă пек персе анчĕ. Эп ун патне чупса пытăм та мăйĕнчен çакнă çăраççине илсе каялла кермене чупрăм.

5.

Алăка уçрăмăр та Вирĕмпие куртăмăр. Вăл пысăк вырăн çинче лăпкăн кăна сывăрать. Якампа пĕр ăстрăм алăк умĕнче тăтăмăр – тем тумалла? Вара çывракан патша майри патне чупса пытăм та кăвак кĕл чечеке унăн пичĕ тĕлне илсе пытăм. Ман алăри роза пĕчĕккĕн-майĕпен ирĕлсех кайрĕ. Патша майри куçĕсене мăч-мăч туса илчĕ те – уçрĕ. Тутлăн карăнса илчĕ. Вара пире асăрхарĕ. Ман çине питĕ тĕлĕнсе пăхрĕ вăл: кăткă мар та-ха – çын. Якам патша майрине пуç тайрĕ. Эпир Вирĕмпие Ăнтăк патшалăхĕнче мĕн пулса иртнине каласа патăмăр. Вăл пире тимлĕ итлерĕ. Иксĕмĕре те тав сăмахĕ каларĕ, мана вара пуçран ачашласах мухтарĕ. Вара эпир пĕрле керментен тухрăмăр.

6.

Савăнăçлă хыпар хăвăрт сарăлчĕ. Кăткă-халăхĕ – сарисем те, хĕрлисем те – патша керменĕ умне пухăнчĕ.

Тĕктĕмпине тĕрмене лартрĕç. Халĕ вăл никама та япăх тăваймасть. Чирĕнчен сывалайсан ирĕке кăлараççĕ ăна, çапах та патшалăха ертсе пыма ăна шанас çук текех.

Якампа пĕрле чиперех тăраттăмăр, шарт сиктерсе тусăм хулпуççи сине такам аллине хучĕ. Çаврăнтăмăр та – Якамăн пиччĕшĕ иккен. Сывах, чĕрĕ! Сарă кăткă пиччĕшне ыталаса мăйĕнченех çакăнса ларчĕ.

– Вирĕмпи вăраннипе пур кăткă та чĕрĕлнĕ, – ăнлантарчĕ тусăмăн пиччĕшĕ.

Йĕри-тавра пăхрăм та – пурте хăйсен çĕнĕрен таврăннă

пиччĕшĕсене, ывăлĕсене ыталаççĕ. Вĕсем çине савăнса пăхнăçем чĕрере тунсăх хускалса илчĕ.

Пĕр кĕтмен çĕртен ман пата Вирĕмпи пырса тăчĕ:

– Тавтапуç сана! Эсĕ пулман пулсассăн манăн халăх пĕтетчĕ. Çак мăй çаккине парнелетĕп сана. Ăна тăхăнсанах каялла хăвăн тĕнчӳне таврăнатăн, килне çитетĕн. Пиччӳ çухалнине те пĕлетĕп эпĕ. Çакна та пĕл: вăл чĕрĕ. Пурнăçа ялан ăнланса пĕтерме çук. Кĕтмен çĕртен парне тума юратать вăл. Халĕ вара сывă юл! – терĕ те мăй çаккине тăхăнтартрĕ. Куç хуралса килчĕ те – каллех тӳнсе кайрăм.

6.

– Катюша! Катя тетĕп! Тăр-ха! – илтрĕм анне сассине. – Мĕн эс кăткă йăви çинче сарăлса выртатăн? Çамку çинче тата мĕн мăкалĕ? Ах, тур-тур, санпала – çак туратран пырса çапăннă ĕнтĕ. Ăçта пăхатăн утнă чухне? Куçусем ăçта?.. – мăкăртатма пуçларĕ вăл.

– Анне, паян килнĕ çырăва вуламан-и эсĕ? – ыйтрăм унран сасартăк.

– Çук, хĕрĕм, вăхăт пулмарĕ. Унта мĕн çырнинчен те хăратăп тата. Мĕншĕн ыйтатăн?

– Паян пичче таврăнать. Атя хăвăртрах киле каяр!

Анне кăнн! пăхса илчĕ те ман çине – ĕненчĕ. Вĕçтертĕмĕр килелле. Пирĕн тĕле темле машина чарăннă. Эпир часрах пӳрте вирхĕнсе кĕтĕмĕр. Сĕтел хушшинче пичче ларать. Тытăнтăмăр ăна ыталама, чуп тума. Пурин те савăнăç куççулĕ юхать. Унтан анне сĕтел хатĕрлерĕ. Апат çиме лартăмăр.

– Катюша, мĕн пулнă санăн çамкуна? – ыйтрĕ пиччем.

– Вăрманта туратран пырса çапăнтăм, – терĕм.

Йăлтах каласа пама кирлĕ мар ăна, мĕншĕн тесен хам та пĕлместĕп: те тĕлĕк пулчĕ ку, те чăнласах. Пичче киле таврăнчĕ – апла пысăк пĕлтерĕшлех те мар ĕнтĕ манăн тĕлĕк.

САМАХ КАÇМАШ

Николай КРАСНОВ (Йĕпреç районĕ) хатĕрленĕ



Сылтăмалла: 3. Минерал. 7. Арçын ячĕ. 10. Театрти ушкăн. 11. Азири çĕр-шыв. 12. Арменири ту. 13. Бурятсен хресченĕ. 15. Акуна-... 18. Континент. 19. Сирпĕтмелли хатĕр. 20. Вăл патриарх пулнă. 23. Уçăлса çӳремелли вырăн. 24. Египет çынни. 25. Яшкари турам. 28. Ĕлĕкхи туркăсен ...патши. 30. Финляндири кӳлĕ. 31. Авалхи римлянсен укçи. 33. Çаврăнса ӳкнĕ пăр катăкĕ. 34. Сурăхсен «вити». 37. Африкăри çĕр-шыв. 38. Трактор пайĕ. 39. Çар техники. 42. Вырăс юрăçи, хĕрарăм. 46. Пулă. 48. Стена çинчи агитка. 49. Çулçăсем ӳкнĕ вăхăт. 50. Нухрат. 51. Инди писателĕ. 53. Йĕлтĕр йĕрĕ. 57. Банкет евĕрскер. 59. Пулă тытмалли хатĕр. 61. Вăл пулăça кирлĕ. 63. Çава хăйри. 67. Ял пайĕ. 68. Вăл ĕнсе хыçĕнче çӳрет. 69. Хĕрарăмсен журналĕ. 70. Актриса – ... Чурикова. 71. Ĕлĕкхи çар çынни. 72. Пан улми сорчĕ. 73. Арçын ячĕ. 74. Талăк пайĕ.

Аялалла: 1. Мирлĕ.... 2. Чăваш апачĕ. 3. Унран аслă пулма хушман. 4. Амазонка юппи. 5. Хваттерти хурт-кăпшанкă. 6. Хими элеменчĕ. 7. Офелия, Одетта, ... 8. Унăн тĕп хули – Дамаск. 9. Мăлатук умĕнче пуç таякан. 14. Хĕр-тус. 16. «Любэ» ушкăнăн хичĕ. 17. Архитектура элеменчĕ. 21. Чечек. 22. Хăма. 23. Çар ушкăнĕ. 25. Пылак шĕвек. 26. Хурт-кăпшанкă. 27. Гана çĕр-шывĕн тĕп хули. 29. Хĕрлĕ тĕс. 32. Пустав. 35. Мухтаса çырнă сăвă. 36. Типсе пыракан тинĕс. 37. Кун тăршшĕ. 40. Ăна лаша сĕтĕрет. 41. Вĕренӳ пӳлĕмĕ. 42. Çурт тĕрекĕ. 43. Ут-урапа таврашĕ. 44. Антрекот, бефстроганов, ... 45. Минерал. 47. Çыпăçакан курăк. 52. Мушкетерсенчен пĕри. 54. Кĕвĕ-ташă стилĕ. 55. Казаксен офицерĕ. 56. Пысăк попугай. 58. Сĕт-çу тăванĕ. 60. Офис ĕçченĕ. 62. Снаряд. 64. Япони техники. 65. Телефон номерне тупса палăртакан хатĕр. 66. Бразили футболисчĕ.

© САМАНТ

Аслă классенче вĕренекенсемпе çамрăксен журналĕ

ИНДЕКС
73208 (республикăра)
11467 (республика тулашĕнче)

1929-1991 çулсенче «Хатĕр пул!», 2003 çулччен «Çилçунат» ятсемпе тухнă

5 (668) № 2014 ç.

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ.

Директор-тĕп редактор - **А. ЛЕОНТЬЕВ.**

Яваплă редактор - **В. СТЕПАНОВ.**

Компьютер дизайнĕ - **И. МИЛОВИДОВА.**

Пирĕн сайт: **www.hypar.ru**

Электрон адрес: **tantas@list.ru**

Пирĕн адрес: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев пр.,13, Пичет çурчĕ, «Хыпар» Издательство çурчĕ

Телефонсем: **56-00-67** **28-83-89**

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕ (Роскомнадзор) 2013 çулхи раштав уйăхĕн 12-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00310 № регистрациленĕ.

Хакĕ ирĕклĕ.

Журнала редакцире калăпланă, «Чувашия» ИПК» ПУП (И. Яковлев пр.,13) пичетленĕ.

Пичете алă пуснă: 21.04.14.
Пичетленĕ: 29.04.14.

Хут формачĕ 60х84 1\8
Усл. п. л. 2,83.
Тираж 1592 экз.
Заказ № К-941

Кристина ЛЕОНТЬЕВА

Тигр çулĕнче çуралнă, гороскоппа – Тараса. Ташлама тата юрлама юратать, спортпа туслă. Чи кăмăллакан тĕссем – кăвак тата хĕрлĕ. Юратнă çеçкесем – кĕл чечек тата салтак тӳми (ромашка). Пушă вăхăтра амăшне пулăшма васкать. Ырă кăмăллă, чăтăмлă, илемлĕ амăшĕ – Кристинишăн пур енлĕ тĕслĕх.

Анастасия ГУРЬЯНОВА

Гороскоппа – Арăслан, Тигр çулĕнче çуралнă. Ташлама ăста, юрлама та пултаруллă. Симĕс, кăвак тата хĕрлĕ тĕссем килĕшеççĕ. Настьăшăн тĕнчере пур чечек те хитре. Пушă вăхăтра кĕнеке вулама юратать, амăшне пулăшать. Куçран суйнине чăтма пултараймасть.